24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
25
ЫТЛАРИКУН
46 (5761) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Вырăнти Советсен яланлăх комиссийĕсем

Пирĕн власть органĕ пулса тăракан Советсен ĕçĕ нумай енлĕ. Вĕсем пур типе правительствăн решенийĕсене вырăнсенче тӳрремĕнех пурнăçа кĕртсе пыракансем пулса тăраççĕ. Вĕсем ăнăçлă ĕçлени хамăрăн хуçалăха ăталантарса пыма, ĕççыннисен пурнăçшайне ӳстерсе пыма, вĕсен культурлăхне хăпартма, пĕр сăмахпа каласан, социализмлă строительствăна ăнăçлăн туса пыма май парать. Çак нумай енлĕ ĕçе туса пырассинче Советсен яланлăх комиссийĕсем питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вырăнти Советсен яланлăх комиссийĕсем хăйсен ĕçне туса пыма иртнĕ суйлавсем хыççăн тытăнчĕç. Çак вăхăтра вĕсем хăйсен ĕçне йĕркелесе ярса, хуçалăх тата культура строительствин ытăвĕсене татса парас ĕçре вырăнти Советсемпе вĕсен исполкомĕсене пысăк пулăшу пачĕç. Актива хăйсем тавра пĕрлештерсе, вĕсемпе пĕрле ĕçлесе, яланлăх комиссисем Советсенче сӳтсе-явма чылай ыйтусем кăларса тăратрĕç, Советсен тата государство влаçĕн çулти органĕсен решенийĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерчĕç. Ĕçсыннисен йышлă массисене Советсен практикăллă ĕçĕсене тунă çĕре анлăн хутшăнтарчĕç. Çапла вара яланлăх комиссисем нумайĕшĕ хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланнă, вĕсем хăйсен ĕçне Советсен исполкомĕсемпе килĕштерсе, пуçаруллăн тата тимлĕн туса пычĕç.

Яланлăх комиссисен ĕçĕнчи лайăх тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Ишлей райсовечĕн вырăнти промышленность тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕ район пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан çĕнĕ предприятисем лартас ыйтăва исполком ларăвĕнче пăхса тухма тăратнă. Комисси сĕнĕвĕсене исполком пĕтĕмĕшпех йышăннă. Çав предприятисем ĕнтĕ кĕçех ĕçе кĕреççĕ. Комсомольский райсовечĕн ялхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕ те хăйĕн ĕçне начар мар туса пырать. Унăн тĕплĕн туса хатĕрленĕ ĕçĕпланĕ пур, ăна кулленех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Комисси машинно-тракторнăй станцин, колхозсен ĕçне тăтăмах тĕрĕслесе пырать, хăйĕн сĕнĕвĕсене исполком ларăвĕнче тата райсовет сессинче пăхса тухма тăратать. Комсомольский район 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ, çакăнта ĕнтĕ яланлăх комиссии пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăнă.

Улатăр райсовечĕн ялхуçалăх комиссийĕ те лайăх ĕçлесе пырать. Комиссин кашни членне пĕр-пĕр паллă участок çумне е колхозсен пĕр-пĕр группи çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем çав колхозсенче комисси планĕ тăрăх палăртнă ĕçсене туса пыраççĕ. Çапла майпа комисси колхозсене производствăллă плансем тăвас ĕçре пысăк пулăшу панă, колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче вăрлăхсем мĕнле улăштарнине тĕрĕслесе тăнă, тырпул пухса кĕртес вăхăт валли ялхуçалăх инвентарĕсене, урапасене, амбарсене мĕнле хатĕрленине тĕрĕсленĕ, трактор ĕçĕсен пахалăхне сăнаса пынă. Çĕрпӳ райсовечĕн культурăпа çутĕç комиссийĕ хăйĕн тавра 140 активиста явăçтарнă, вĕсем пулăшнипе шкулсен, ачасен çурчĕн ĕçĕсене тĕрĕслесе, вĕрентӳри ситменлĕхсене пĕтерме пулăшнă.

Хĕрлĕ Чутай райсовечĕн бюджет комиссийĕ районри бюджет валли чылай укçа-тенкĕ тупса панă, планпа пăхман тупăшсене палăртнă, предприятисене çĕнĕ тупăшсем илмелли майсене кăтартса панă, финанс дисциплинине пăсничсене хирĕç кĕрешсе пынă. Комисси исполком ларăвĕнче пăхса тухма 11 ыйту тăратнă, сессире пăхса тухма 3 ыйту тăратнă. Енĕш ялсовечĕн (Шăхасан р.) бюджет комиссийĕ те хăйĕн ĕçне начар мар туса пырать. Комисси тăрăшнипе заем укçине пухса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Çакăн пек лайăх ĕçлекен комиссисене нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем хăйсен обязанноçĕсене, хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланса илнĕ, тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, вырăнти Советсен тивĕçлĕ помощникĕсем пулса тăраççĕ.

Анчах чылай Советсен яланлăх комиссийĕсем халĕ те тивĕçлипех ĕçлеме тытăнман-ха. ЧАССР Верховный Совечĕн Президиумĕ татăклă кăтартусем панă пулин те, вырăнти Советсен исполкомĕсем яланлăх комиссисен ĕçне лайăхлатма пулăшмаççĕ, е тата комиссисен функцийĕсене те ăнланмаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Кувакино райсовечĕн исполкомĕ хăйĕн ларăвĕсенче яланлăх комиссисен отчечĕсене итлеме тытăннă. Вăл кăна та мар, чылай комиссисем хăйсем те обязанноçсем çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Сăмахран, Канаш райсовечĕн сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕ нумай вăхăт хушши комиссире миçе член пулманлине пĕлмесĕр пурăннă. Улатăр хула Совечĕн шкулсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ хăй тума тивĕçлĕ мар ĕçсене тума тытăннă. Вăл шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентес методика ыйтăвĕсене хăй çине илнĕ, шкулсене кирлĕ средствăсене валеçсе панă т. ыт. те. Анчах хула Советĕнче пăхса тухма пĕр ыйту та тăратман. Хăшпĕр райсоветсен яланлăх комиссийĕсем, ялсоветсен комиссийĕсене кăтартусем парса, çав кăтартусене пурнăçа кĕртме хушнă. Вырăнсенче революциллĕ законлăха пăснисем пулнă пулин те, яланлăх комиссисем вĕсене асăрхаман. Çак йăнăшсем малашнехи ĕçре пулмалла мар. Комиссисен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла.

Вырăнти Советсен исполкомĕсен хăйсен Советĕн яланлăх комиссийĕсене кулленхи ĕçре тăтăшах пулăшса пымалла, комиссисем лартнă ыйтусемпе вĕсем панă сĕнӳсене вăхăтра тата тĕплĕн пăхса тухмалла, комиссисемпе килĕшсе ĕçлемелле. Яланлăх комиссисен вара çакна асра тытас пулать: вĕсем ĕççынни депутачĕсен Советĕсен органĕсем пулса тăраççĕ, вĕсен Советсене тата вĕсен исполкомĕсене хуçалăхпа культура строительствинче, йышлă массăсене государство ĕçне явăçтарас ĕçре пулăшса пымалла. Советăн сессине пăхса тухма тăратнă ыйтусем тăрăх яланлăх комисси хăйĕн сĕнĕвĕсене парать, Советсен порученийĕсене пурнăçа кĕртсе пырать, Совет йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме пулăшать, хăйĕн отраçли тăрăх предприятисемпе учрежденисем мĕнле ĕçленине, вĕсем Совет решенине мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслет. Çапла ĕнтĕ, яланлăх комиссисем вырăнти Советсен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра вырăнти Советсемпе вĕсен яланлăх комиссийĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссисен суракине хатĕрленес ĕçре, тĕллесех каласан, вăрлăх хатĕрлес, машинăсене юсас, лаша кӳлмелли хатĕрсене йĕркене кĕртес, лаша вăйĕпе тĕрĕс усă курмалла тăвас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсенче вырăнти Советсене пулăшмалла. Комиссисен колхозсем суракине мĕнле хатĕрленнипе тăтăшах интереслемелле. Бюджет комиссийĕсем те хăйсен ĕçне чылаях лайăхлатас пулать. Укçа-тенкĕ пухас ĕç халĕ республикăра çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. Ана лайăхлатас тĕлĕшпе Советсемпе вĕсен бюджет комиссийĕсен çине тăрса кĕрешмелле. Налогсене, заем укçине пухассинче бюджет комиссийĕн пулăшăвĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Уйрăмăнах вырăнти промышленность тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен халĕ вирлĕн ĕçлемелле. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен постановленине йышăннă май, вĕсем умне пысăк та хисеплĕ задачăсем тухса тăчĕç.

Уйрăм округсенчи суйлав кампанине тата ВКП(б) XVIII конференцине хатĕрленнĕ вăхăтра ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ вăйлăн çĕкленчĕ. Çав çĕкленӳпе усă курса, вырăнти Советсен яланлăх комиссийĕсем хăйсен тавра йышлăрах та йышлăрах массăсене явăçтармалла, вĕсене государство ĕçне туса пыма активлăн хутшăнтармалла.

## СССР Оборона Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

**1941 çулти февралĕн 22-мĕш № 96** **Мускав хули**

Юлташсем — красноармеецсем, командирсем тата политработниксем!

Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă кун 193 миллионлă совет халăхĕ Хĕрлĕ Çар ЛЕНИН—СТАЛИН партийĕ ертсе пынипе социализмлă Тăван çĕршывăн тăшманĕсене паттăрлăн çĕнтерсе утса тухнă мухтавлă çулĕсĕре паллă тăватъ.

Хăйĕн пурнăçĕ çирĕм виçĕ çул тултарнă кука Хĕрлĕ Çар тĕнчери питех те йывăр обстановкăра паллă тăватъ.

Тĕнчери империализмлă иккĕмĕш вăрçă вутĕнче, тĕнчен пур кĕтесĕсенче те явăнакан вăрçă вутĕнче, государствăсен чиккисем кăна мар, государствăсем хăйсем те арканса пĕтсе пыраççĕ.

Хăйĕн хуçалăхĕпе обороны хăвачĕ çине, совет халăхĕн моралльĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ çине таянса тăрса, Совет Союзĕ тулашри сталинла ăслă тата нимĕн улшăнман политикăна — мирлĕ пурнăçпа нейтралитет политикине çирĕпĕн пурнăçа кĕртсе пырать.

Çакă тулашри сталинла ăслă политика иртнĕ çул пире чаплă çĕнĕ çĕнтерӳсем тума май пачĕ: Совет Союзĕн вăйĕсем нумай хут ӳсрĕç, унăн чиккисем çирĕпленчĕç. Çурçĕр-хĕвеланăç чиккисемпе Ленинград хулишĕн хăрушсăрлăх туса хунă. Çирĕм çул каярах боярина Руминия законсăр йĕркепе туртса илнĕ Бессарабия каллех советлă Бессарабия пулса тăчĕ. Советлă çĕр пулса тăчĕ Çурçĕр Буковина. Балтий тинĕсĕн çыранĕсем çинче ССР Союзĕ тĕреклĕн çирĕпленсе тăчĕ — Литва, Латвия тата Эстония совет халăхĕсен семьине кĕчĕç.

Хăйĕн пурнăçĕн çирĕм виçĕ çулĕ хушшинче чи çĕнĕ çар техникипе пуянланнă чаплă калăсемлĕ Хĕрлĕ Çар **Сталин** юлташ, Парти, Правительство тата пĕтĕм совет халăхĕ тăрăшнине,— хăваттă тата тăшманшăн хăрушă вăй пулса тăчĕ.

Пирĕн задача çакăн пек: тунă çитĕнӳсемпе чарăнса тăмалла мар, çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар, мăнкăмăлланмалла мар. Кучухнехи вăрçă çакна ыйтать: мĕнпур боецсемпе начальниксем çапăçу хирĕнчи физически тата моралльĕ пысăк йывăрлăхсене чăтса ирттерме пĕлмелле, вĕсене пĕр-пĕрне пулăшас тата кирлĕ пулсан пурнăçа пама та хатĕр тăрас туйăмпа воспитани памалла. Çирĕп дисциплина, пуçарулăх, хăюллăх, çине тăрса тăрăшни Хĕрлĕ Çарти кашни боецпа командирăн пĕр уйăлми пахалăхĕ пулмалла. Мирлĕ обстановкăра войскăсене вăрçăра мĕн кирлине кăна вĕрентесси тата вăрçăра мĕнле пулать çавăн пек кăна вĕрентесси — мĕнпур командирсемпе политработниксен чи пĕрремĕш обязанноçĕ.

Тĕнчери йывăр обстановкăра, мĕнпур йышши кĕтмен ĕçсем кăларса тăратма пултаракан обстановкăра, кашни красноармеец, командир тата политработник сыхă пулмалла, хăйсен çарти специальноçне çине тăрса вĕренсе пымалла тата **Сталин** юлташăн çак кăтартăвне яланах асра тытмалла: «Нимĕнле «ăнсăртлăх» та тата пирĕн тулашри тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен килсе тивме ан пултарчăр тесе, вăрçăна килсе тапăнас хăрушлăх умĕнче пирĕн пĕтĕм халăха мобилизациллĕ хатĕр тытса тăмалла...»

Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕнчи халăхсен мирлĕ ĕçĕн хăватлă тĕрекĕ пулнă, халĕ те вăл çавăн пекех тата малашне те çавăн пекех пулĕ. Вăл Партипе Правительство чĕнсен, пурне те, Совет Союзĕн таса чиккисем çине алă çĕклекенсене пурне те çĕмĕрсе тăкма кирек хăш минутăра та хатĕр тăрать, пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенине паттăрлăн, пĕлсе, тивĕçлĕн те чыслăн хӳтлесе хăварма пултарать.

Хĕрлĕ Çарăн боевой ялавĕсем Хĕрлĕ Çар пирĕн Социализмлă Государствăн тăшманĕсене хирĕç пынă кĕрешӳ фрончĕсенче тунă геройла çĕнтерӳсен мухтавĕпе чапа тухнă.

Юлташсем — красноармеецсем, командирсем тата политработниксем!

Хăвăрăн боевой тата политикăллă пĕлӳлĕхе хăпартса пырăр, совет çар дисциплинине çирĕплетсе пырăр, хамăрăн Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр тăрăр.

Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă праçника май Сире сывлăх сунса саламлатăп.

**Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!**

**Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ — Хĕрлĕ Çарăн çулпуçĕ тата организаторĕ!**

**Сывă пултăр пирĕн тăван, юратнă тата аслă Сталин!**

**СССР Союзăн Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ**
**С. К. ТИМОШЕНКО.**

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Хĕрлĕ Çар механизацийĕпе моторизацийĕн И. В. Сталин ячĕпе тăракан Çар Академине Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Хĕрлĕ Çар механизацийĕпе моторизацийĕн **И. В. Сталин** ячĕпе тăракан Çар Академийĕ 10 çул тултарнине паллă тăвас шутпа тата Хĕрлĕ Çарăн Автобронетанковăй войскисем валли кадрсем хатĕрлес ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Академине **Ленин орденĕпе наградăлас.**

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Председателĕ М. КАЛИНИН.**

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Секретарĕ А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 22-мĕш.

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Киеври П. П. Лебедев ячĕпе тăракан пĕрремĕш артиллери училищин ятне улăштарасси çинчен

Киеври П. П. Лебедев ячĕпе тăракан пĕрремĕш артиллери училищин ятне улăштарса, ăна **С. М. Киров** ячĕпе тăракан училище тесе ят парас.

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Председателĕ М. КАЛИНИН.**

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Секретарĕ А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 22-мĕш.

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Хĕрлĕ Çарăн военно-учебнăй заведенийĕсемпе часĕсене наградăласси çинчен

Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнине паллă тăвас шутпа, çар ĕçĕпе политикăна вĕрентсе хатĕрлес ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем тунăшăн çаксене **наградăлас:**

**ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ:**

1. Мускаври **Красин** ячĕпе тăракан пĕрремĕш артиллери училищине.
2. Киеври **С. М. Киров** ячĕпе тăракан пĕрремĕш артиллери училищине.

**ХĔРЛĔ ÇАЛТАР ОРДЕНĔПЕ:**

1. 99-мĕш стрелковăй дивизин пĕрремĕш стрелковăй полкне.
2. 45-мĕш стрелковăй дивизин 253-мĕш стрелковăй полкне.
3. Уйрăм кавалери бригадин пĕрремĕш кавалери полкне.
4. Пĕрремĕш мото-стрелковăй дивизин 6-мĕш мото-стрелковăй полкне.

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Председателĕ М. КАЛИНИН.**

**СССР Верховный Совет Президиумĕн**
**Секретарĕ А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 22-мĕш.

## ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флот Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

**1941 çулти февралĕн 23-мĕш № 98** **Мускав хули**

Юлташсем — краснофлотецсем, командирсем тата политработниксем!

Паян социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем, 193 миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ XXIII çул тултарнине уявлать. Çак чаплă та паллă куна пирĕн тăван çĕршыв большевикла парти, аслă Сталин ăслăн ертсе пынипе тунă çĕнĕ историллĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илет.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ Советсен çĕршывĕн чиккисене çирĕм виçĕ çул хушши сыхласа тăраççĕ. Çар морякĕсен мухтавлă боевой традицийĕсене социализмлă хăватлă державăн тинĕс чиккисене сыхласа тăракан флотăн пĕтĕм личнăй составĕ асра тытса тăратъ.

Çак кунсенче ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ, вăл конференци пирĕн промышленноçпа транспорт ĕçĕсен итогĕсене туса пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхне малалла çĕклесе тата аталантарса пымалли плана, социализмлă государствăн хăвачĕпе оборона пултарулăхне малалла тĕреклетсе пымалли плана палăртрĕ.

Иртнĕ çулта пирĕн халăх хуçалăхĕ Сталинла Виççĕмĕш Пятилеткăна пурнăçа кĕртес енĕпе çĕнĕрен калама çук пысăк утăм турĕ.

Çĕнĕ техникăна ăнăçлăн вĕренсе алла илсе пынă май тата оборона промышленноçĕ ӳссе пынă май Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне техникăпа, кучухнехи чи вĕрçĕнĕ вооруженине пуянлатасси чылаях ӳсрĕ. СССР татах та ытларах хăватлă государство пулса тăчĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ XXIII çул тултарнине эпир тĕнчери ларутăру питех те çивĕчленсе çитнĕ вăхăтра паллă тăватпăр. Империализмлă иккĕмĕш вăрçă ытларах та ытларах сарăлса пырать, вăл çĕнĕ те çĕнĕ государствăсене тата халăхсене çавăрса илсе пырать. Совет Союзĕ, тулашри сталинла ăслă политикăна пула, вăрçă тулашĕнче тăрать, вăл хăйĕн ĕçне ăнăçлăн туса пырать. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен умĕнче Советсен çĕршывĕн авторитечĕ калама çук пысăккăн ӳсрĕ.

Иртнĕ çулталăк совет хĕçпăшалĕн çĕнĕ те мухтавлă çĕнтерĕвĕсемпе паллă пулса тăрать.

Тинĕс-Çар Флочĕшĕн иртнĕ çулталăк малалла ӳссе тата тĕреклесе пынă çулталăк пулчĕ. Çĕнĕ, пур клари боевой карапсем тăтăшах строя кĕрсе пыраççĕ, вăл карапсем кучухнехи вĕрçĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнă. ССР Союзĕн пысăк тинĕс тата океан строительствин программи ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Социализм çĕршывĕн тинĕс чиккисене сыхласси ытларах та ытларах çирĕплесе тата шанчăклăрах пулса пырать.

Карапсемпе чăссем çар ĕçне вĕренсе хатĕрленессин пур енĕпе те çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Тинĕс-Çар Флотĕнчи единоначалине тата дисциплинăна çирĕп вырăна лартас тĕлĕшпе Совет правительстви тăвакан мероприятисем карапсемпе чăссен боевой хăватне татах та ытларах вăйлăлатрĕç.

Флотри боевой хатĕрленӳ ĕçне кучухнехи тинĕссенчи операцисене шута илни тăрăх урăхлатса çĕнетеççĕ. Карапсемпе чăссен личнăй составĕ боевой техникăна тата тинĕс-çар культурине çине тăрса вĕренсе алла илет. Анчах тунă çитĕнӳсемпе эпир лăпланса ларма пултараймастпăр.

Флотăн боевой хăвачĕ малашне те тăтăшах, кунран кунах ӳссе пыма тивĕçлĕ. Кучухнехи тĕнчери лару-тăру флотăн личнăй составĕнчен çапăçăва хатĕр тăрассине ӳстерес тĕлĕшпе калама çук вăйлăн ĕçлеме ыйтать. Нимĕнле ăнсăртлăхсем те пирĕн туса пымалла: çав хĕçпăшала отличнă вĕренсе çитмелле, мĕншĕн тесен хăюллă, татăклăн та ĕçе тĕплĕн пĕлекен боецсемпе командирсен аллисенче техникăн боевой хăвачĕ темиçе хут ӳсет.

Техникăна вĕренсе алла илес задача флотăн пур звенисенчен те пысăк культурлăх тата организованно пулма ыйтать, пур степеньри командирсенчен те пысăк пĕлӳлĕх тата ĕçе тĕплĕн пĕлме ыйтать, краснофлотецсене хăйсен ĕçне çине тăрса хăнăхса пыма хушать, вĕсен хăйсене шанса панă техникăна питĕ тĕплĕн вĕренсе алла илсе, унпа усă курнă чухне хăйсен ĕçĕсене пит чаплăн туса пымалла.

Карапсемпе чăссенче çар дисциплинине малашне те пĕрмаях çирĕплетсе пымалла. Дисциплина — карапăн, чăсĕн боевой хăвачĕн тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Çуллĕ вырăнта тăракан дисциплина тата организованность — çарти хатĕрленӳн, техникăна вĕренсе алла илес задачăсене татса памалли чи кирлĕ услови пулса тăраççĕ.

Юлташсем — краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем!

Тинĕс-çар флочĕн çапăçăва хатĕр тăрассине тата ытларах вăйлăлатăр. Çар дисциплинине ывăнма пĕлмесĕр хăпартса пырăр. Техникăна вĕренсе алла илĕр, хăвăрăн тактикăллă хатĕрленĕве çĕнетсе, ӳстерсе пырăр. Идейăллă хăваттă хĕçпăшала — Марксăн—Энгельсăн — Ленинăн — Сталинăн аслă вĕрентĕвĕсене вĕренсе алла илĕр.

Большевикла сыхлăха пĕр пăркаланмасăр ӳстерсе пырăр. Тинĕс-çар культурине вĕренсе алла илĕр, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярăр, çарти хатĕрленӳре отличниксен речĕсене темиçе хут нумайлатăр.

Сире, юлташсем, краснофлотецсем, командирсем тата политработниксем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ XXIII çул тултарнă ятпа сывлăх сунса саламлатăп.

Сывă пултăр Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă та никам çĕнтерейми партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ!

**СССР Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ адмирал Н. КУЗНЕЦОВ.**

## Хĕрлĕ Çарăн начальствующий тата рядовой составне наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указ тăрăх Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнине паллă тăвас шутпа, боевой заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата войскăсене çар ĕçĕпе политикăна вĕрентсе хатĕрлес тата воспитани парас ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем тупăшăн, Хĕрлĕ Çарăн начальствующий тата рядовой составĕнчи 1.883 çынна СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

**Ленин орденĕпе** 35 çынна наградăланă. Вĕсен шутĕнче: генерал-майор А. Н. Астанин, корпусной комиссар В. Н. Богаткин, генерал-лейтенант Н. Ф. Ватутин, генерал-майор А. А. Власов, генерал-лейтенант В. Ф. Герасименко, генерал-лейтенант Ф. И. Голиков, корпусной комиссар С. К. Кожевников, корпусной комиссар А. Ф. Колобоков, генерал-майор И. А. Корнилов, инженернăй войскăсен генерал-майорĕ Л. З. Котляр, генерал-лейтенант Ф. И. Кузнецов, генерал-лейтенант М. М. Попов, генерал-лейтенант В. Д. Соколовский, арми генералĕ И. В. Тюленев, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕ Я. П. Федоренко, генерал-лейтенант Н. Т. Черевиченко, артиллери генерал-лейтенанчĕ Н. Д. Яковлев.

**Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** 241 çынна наградăланă. Вĕсен шутĕнче: генерал-майор К. Ф. Баронов, генерал-майор Н. Н. Белов, генерал-майор В. Е. Белокосков, иккĕмĕш рангри арми комиссарĕ В. Н. Борисов, корпусной комиссар П. А. Дипрова, генерал-майор Д. Г. Егоров, генерал-лейтенант А. И. Еременко, генерал-лейтенант И. Г. Захаркин, генерал-лейтенант Ф. С. Иванов, генерал-лейтенант С. А. Калинин, генерал-лейтенант П. С. Кленов, генерал-майор А. А. Коробков, авиаци генерал-майорĕ А. М. Кравцов, генерал-лейтенант В. И. Кузнецов, генерал-лейтенант Г. Е. Маландин, генерал-лейтенант В. И. Морозов, генерал-лейтенант М. А. Пуркаев, авиаци генерал-майорĕ С. П. Синяков, генерал-лейтенант А. А. Тюрин, генерал-майор Г. И. Шерстюк, генерал-майор Г. Д. Шишенин.

**Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе** 527 çынна наградăланă, «**Знак Почета**» **орденĕпе** — 211 çынна, «**За отвагу**» **медальпе** — 692 çынна, «**За боевые заслуги**» **медальпе** — 117 çынна.

СССР Верховный Совет Президиумĕн пĕтĕм Указне «Красная Звезда» хаçатра пичетлесе кăлараççĕ. (ТАСС).

## Хĕрлĕ Çарăн высший начальствующий составне çар званийĕсем парасси çинчен

### СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

СССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Правительство Комиссийĕ çаксене çар званийĕсем парасси çинчен тăратсĕнӳсене çирĕплетес:

**АРМИ ГЕНЕРАЛĔН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**АПАНАСЕНКО Иосиф Родионович.**
**ПАВЛОВ Дмитрий Григорьевич.**

**ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИК ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**КИРПОНОС Михаил Петрович.**
**КУЗНЕЦОВ Федор Исидорович.**
**ЧЕРЕВИЧЕНКО Яков Тимофеевич.**

**АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИКĔН ЗВАНИНЕ ПАРАС:**

**ЯКОВЛЕВ Николай Дмитриевич.**

**СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ В. М. МОЛОТОВ.**
**СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 22-мĕш.

## ТАСС Пĕлтерни

Швейцарири «Базлер нахристен» хаçат çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Болгарипе Турци хушшинче юлашки вăхăтра тунă килĕшӳве Совет Союзĕ активлăн пулăшнипе тунă пуçлать. ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çакăн пек пĕлтерни вăл тĕрĕс мар.

## Хроника

СССР Совнаркомĕ II-мĕш рангри арми комиссарне А. И. Запорожец юлташа I-мĕш рангри арми комиссарĕн званине панă. (ТАСС).

## Партконференци материалĕсене вĕренеççĕ

Чăвашсен Государство Художество Училищинче вĕренекенсем большевиксен партийĕн Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн материалĕсене вĕренме тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе вĕренекенсем хушшинче агитаторсем ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах Калмыкова юлташ хăйĕн ĕçне чыслăн туса пырать.

Халĕ III тата IV-мĕш курсра Маленков юлташăн, Вознесенский юлташăн докладĕсене вĕреннĕ. Ку тĕлĕшпе 5 заняти туса ирттернĕ. Партконференци материалĕсене вĕренесси малалла та пулса пырать.

**П. Чичканов.**

## ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

# Кашни коммунистăн куллен вĕренсе пымалла

ВКП(б) Центральный Комитечĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухнă май партиллĕ пропагандăна йĕркелесси çинчен постановлени йышăннă хыççăн коммунистсемпе комсомолецсем парти историне харпăрхăй тĕллĕн тĕплĕнрех вĕренме тытăнчĕç.

ЦК ВКП(б) çав асăннă постановление йышăниччен Канаш районĕнче парти членĕсемпе кандидачĕсенчен 90 процентĕ парти историне кружоксенче вĕреннĕ. Анчах та кружока çӳрекен коммунистсенчен нумайĕшĕ парти историне çиелтен кăна вĕренсе пынă, конспектсем çырман. Халĕ ĕнтĕ коммунистсем парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Хутла сахал пĕлекен коммунистсем валли парти историне вĕренме парткабинет сумĕнче пĕр кружок организациленĕ. Вăл кружокра 34 çын вĕренет.

Паянхи куна районри коммунистсенчен 111 çын парти историне учебник тăрăх харпăрхăй тĕллĕн вĕренсе пĕтернĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ Ленин, Сталин произведенийĕсене вĕренеççĕ. Акă, Абрамов (ФЗО шкулĕ), Терентьев (райсовет исполкомĕ), Зиновьев (инвалидсен артелĕ), Тимофеев (Текстильсбыт контори) юлташсем парти историне учебник тăрăх вĕренсе пĕтернĕ хыççăн первоисточниксем тăрăх вĕренсе пыраççĕ. Кунашкал лайăх тĕслĕхсем татах та кăтартса пама пулать.

Анчах та, лайăх тĕслĕхсемпе пĕрлех, парти историне вĕренес ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухнине çула ытла иртрĕ пулин те хăшпĕр коммунистсем паянхи кунченех «Кĕске курсăн» иккĕмĕшпе виççĕмĕш сыпăкĕсене кăна вĕренеççĕ.

«Красный воин» артель сумĕнчи пуçламăш парторганизацинче парти членĕсемпе кандидачĕсем 5 çын тăраççĕ. Вĕсем пурте, Зиновьев юлташсăр пуçне, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» иккĕмĕшпе виççĕмĕш сыпăкĕсене вĕренеççĕ. Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Чекуров юлташ хăй те иккĕмĕш сыпăка анчах вĕренет. Çитменнине тата пĕри те конспект çырса пымаççĕ.

Çăвăн пекех, райсовет исполкомĕ сумĕнчи пуçламăш парторганизацинчи коммунистсем те нумайĕшĕ парти историне япăх вĕренсе пыраççĕ. Нумаях пулмасть-ха кунти пуçламăш организацинче юлташла калаçу пулса иртрĕ. Мĕн кăтартса пачĕ-ха çак юлташла калаçу? Коммунистсенчен хăшпĕрисем парти историне пачах пĕлмеççĕ иккен. Акă, ВКП(б) членĕн кандидатĕнчен Семенов юлташран: — РСДРП II-мĕш съездĕнче мĕнле ыйтусем тăрăх разногласи пулнă? — тесе ыйтнă. Çак ыйту çине вăл тĕрĕс ответ парайман.

Парти членĕ Альгашов юлташ: — Эпĕ парти историне йĕркеллĕ вĕренсе пыратăп, — тесе калать. Анчах та юлташла калаçу ирттернĕ чухне вăл парти историне начар вĕренни палăрчĕ. Хăйне пăнă ыйтусем çине вăл тĕплĕн ответ параймарĕ.

Районри çĕрĕç пайĕ çумĕнчи пуçламăш парторганизацинчи коммунистсем те чылайăшĕ хăйсен пĕлӳне ӳстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ парти членĕн кандидачĕ Тимофеев юлташ парти историне вĕренме тытăнни пĕр çул ытла иртрĕ, анчах вăл çапах «Кĕске курсăн» пĕрремĕш сыпăкне кăна вĕренет.

Калас пулать, пуçламăш парторганизаци секретарĕсем те парти членĕсемпе кандидачĕсем марксизм-ленинизм теорине мĕнле вĕренсе пынипе питех те сахал интересленеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ райсоюз, МТС, МТМ тата «Красный воин» артель сумĕнчи пуçламăш организацисенче 1940 çулта та, çавнашкалах кăçалхи çул та партиллĕ пропаганда ĕçĕ çинчен коммунистсен пухăвĕсенче пĕрре те сӳтсе-явман. Кунти пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем коммунистсемпе вĕсем мĕнле вĕренни çинчен уйрăмăн калаçмаççĕ.

ВКП(б) историне вĕренессине коммунистсем хушшинче лайăхлатнипе пĕрлех, комсомолецсем хушшинче те лайăхлатмалла. Комсомолецсем хушшинче парти историне вĕренес ĕç татах та япăхрах тăрать. Районра 2187 комсомолецран 873 комсомолец парти историне вĕренмеççĕ. Çитменнине тата комсомолăн пуçламăш организаци секретарĕсем 95 çын пулсан, хăйсен политикăллă пĕлӳне хăпартас тĕлĕшпе 43 секретарь кăна ĕçлеççĕ.

Комсомолецсен политикăллă вĕренӳне организацилес ĕçре ВЛКСМ райкомĕ те, çавнашкалах партин пуçламăш организацисем те кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн V пленумĕ партиллĕ пропаганда ĕçĕ мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Канаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсен докладне итленĕ хыççăн, парти пропагандине лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнса хăварчĕ. Халĕ ĕнтĕ партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем умĕнче тăракан задача — ВКП(б) Обкомĕн V пленумĕ йышăннă решенине большевикла пурнăçласа пырасси тата коммунистсемпе комсомолецсене вĕренӳре куллен пулăшса пырасси пулса тăрать.

**Ф. АНТОНОВ.**

---

## Член укçине вăхăтра кассăна хывмасть

Шупашкарти партархив çумĕнчи пуçламăш парторганизацин секретарĕ Ярков юлташ коммунистсенчен пухакан член укçине вăхăтра перекет кассине кайса хывас вырăнне ытларах хăй çумĕнче тытса усрать. Ведомость тăрăх август уйăхĕнче коммунистсенчен 104 тенкĕ те 90 пус член укçи пухнă. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче август уйăхĕнче пуçтарнă укçаран мĕнпурĕ те 20 тенкĕ кăна кассăна кайса хывнă. Сентябрьти ведомоçпе 69 тенкĕ те 50 пус пухнă пулсан, октябрĕн 9-мĕшĕнче кассăна 178 тенкĕ те 90 пус хывнă. Çапла вара август уйăхĕнче пуçтарнă член укçине октябрь уйăхĕнче кăна кассăна хывнă. Çавăн пекех, октябрь уйăхĕнче коммунистсенчен член укçи 70 тенкĕ те 90 пус пуçтарнă пулсан, вăл укçаран ноябрĕн 6-мĕшĕнче пĕтĕмпе те кассăна 26 тенкĕ те 90 пус кăна хывнă. Ноябрь уйăхĕнче пухнă член укçинчен каллех 50 тенкĕне яхăн хăйсен сумне хăварнă. 1941 çулти февралĕн 8-мĕш тĕлне Ярков сумĕнче иртнĕ çулта пухнă член укçи 27 тенкĕ те 80 пус сӳрет.

Член укçи пухмалли ведомоçсене те Ярков юлташ йĕркеллĕ çĕлесе пымасть, вĕсене йĕппе кăна хĕстерсе хунă. Пĕрке тăрăх, кашни ведомость çине секретарĕн ăлă пусмалла, ăна та Ярков юлташ пурнăçа кĕртсе пымасть.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ коммунистсенчен пухнă член укçине алăра тытса усрама юраманни çинчен пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене яланах асăрхаттарса тăрать. Анчах, пĕр асăрхаттарни кăна çитмелĕкĕр, çав кăтартусене парторганизацисенче мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çине тăрсах тĕрĕслесе тăни кирлĕ.

**А. Г.**



Паян, февралĕн 25-мĕшĕнче, Грузин ССР 20 çул тултарать. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Тбилиси хулинчи Л. П. Берия ячĕпе тăракан «Динамо» стадионĕ. В. Черкасов фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

# Ачасене воспитани парасси—чыслă ĕç

Пирĕн парти çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас ĕçе шкулсене, ача-пăча учрежденийĕсене шанса панă. Вĕсен телейлĕ çĕршыври çамрăксенчен пултарулла, çĕршыва парăнса ĕçлекен çынсем хатĕрлессишĕн питех те тимлĕн ĕçлемелле, парти шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымалла. Çĕрпӳ хулинчи ачасен суртĕнче ĕçлекенсем çакна тивĕçлипе ăнланайман-ха. Кунта, пуриншĕн те палла, ашшĕ-амăшсĕр ачасем пурăнаççĕ. Апла пулсан, ача суртĕнчи воспитательсем, учительсем тата кунти работниксем вĕсен чи çывăх тăванĕсем вырăнех шутланаççĕ. Кунта пурăнакан кашни ача хăйĕн воспитателĕ тата учителĕ çине хăйĕн тăван ашшĕ-амăшĕ çине пăхнă пек пăхать. Ашă сăмах, ăслă канаш кĕтеççĕ вĕсем хăйсен воспитателĕсенчен. Кашни ача хăйĕн воспитателĕ пек пулма, унтан пример илме тăрăшать. Çакăнтан ĕнтĕ воспитателĕн ролĕ пысăкки каламасăрах палла.

Иртнĕ çулта кунта ашкăнакан ачасем нумай пулнă. Халĕ ун пек харсăр ачасен шучĕ чакса пырать. Ачасен çурчĕн территорине пырса кĕретĕн. Малтанхи хут тĕлпулатăн пулсан та, сирĕнпе кăмăллăн сывлăх сунса паллашаççĕ. Йĕркеллĕ калаçаççĕ. Пăхатăн та, пĕчĕк ачасем хăйсене йĕркеллĕн тытнипе савăнатăн. Воспитани тата вĕрентӳ ĕçне тивĕçлипе организацилени мĕн тери тĕрĕс ӳсме май парать вĕсене.

300 ача ытла пурăнаççĕ кунта. Старшовсăр пуçне пурте шкулта вĕренеççĕ. Старшов харсăрланать, учительсем каланине итлемест иккен. Дисциплинăна пăснăшăн иккĕмĕш хут шкултан кăларса янă. Эпир пынă чухне вăл хăйсен общежитинче кĕнеке вуласа тăрать. Шкулта вĕренекен юлташĕсенчен уйăрнăшăн кулянать вăл. Эпир ăна лайăхах туйса илтĕмĕр. «Ыранах шкула илме ыйтса заявлени паратăп. Малашне шкулта та, общежитинче те атăшмастăп»,—тет Старшов. Мĕн çитмест çак ачана? Воспитательсемпе учительсен çакна тĕрĕслесе пĕлмелле тата Старшова юсанма пулăшмалла пулнă.

Пиллĕк общежити. 6-мĕшпе 7-мĕш классенче вĕренекенсен общежитисенче йĕрке лайăх. Кроватьсем çинче тӳшексем, тӳшексем çинче çĕнĕ одеялсемпе шурă простыньсем йĕркеллĕн сарăлса выртаççĕ. Кашни кровать тĕлĕнче тумбочка. Радио кĕртнĕ. Стенасем сумĕнче тĕрлĕ лозунгсем, çулпуççен портречĕсем çакăнса тăраççĕ.

Пур общежитисенче те çакăн пек лайăх йĕрке тума май пулнă. Анчах та ачасен çурчĕн директорĕ уншăн тăрăшман. 2-мĕшпе 3-мĕш классенче вĕренекенсен общежитинче нимĕн йĕрке те çук. Тӳшексем пĕтĕмпех çĕтĕлсе пĕтнĕ. Тӳшексем çинче таса мар тата çĕтĕк-çатăк минтерсем тăраççĕ. Хăшпĕр кроватьсем çинче хăмасем çук, вĕсем вырăнне йĕлтĕр е ытти япаласем хунă. «Кровать çине хунă хăмасене ачасем хăйсем кăмакана хутса çунтарса пĕтернĕ»,—терĕ пире ачасен çурчĕн директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Антонов юлташ. Вăл чăннипех çапла пулнине сирĕнлетсе калама хĕн. Анчах çакă палла: кантăксене пĕрер хут кăна лартнă, хăшпĕр кунсенче общежитире чăтма çук сивĕ пулать. Çавăнпа та ĕнтĕ кроватьсене юнашар лартса ик-виç ача пĕрле выртса çывăрнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Çакăн пек начар условире пурăннине пула хĕле кĕнĕренпе чылай ача гриппа чирленĕ.

Воспитательсем пурĕ 17 çын. Ачасене воспитани парасси вĕсенчен нумай килет. Анчах та хăшпĕр воспитательсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Вĕсем хушшинче çак пысăк ĕçре тивĕçлĕ мар çынсем те пулнă. Вожатăй пулнă Иван Матвеева хулиганла ĕçсем тунăшăн судпа айăпласа тĕрмене хупнă. Çавăн пекех воспитательсене Гавриловпа Сидоркина та судпа айăплана. Çавăн пек çынсене ачасене воспитани парас ĕç çывăхне те ямалла мар пулнă.

Ачасем шкултан вĕренсе тухнă хыççăн уçăлса сӳресшĕн. Акă пысăк перемена вăхăтĕнче пуçламăш классенче вĕренекенсем тула чупса тухрĕç. Вĕсем тӳрех хăмасем çапса тунă тăвайкки патне пычĕç. Çӳле улăхаççĕ те çаматăсемпе ярăнса анаççĕ. Çак пĕчĕк ачасене директци çунашкасем те илсе паман. Директор заместителĕ Антонов юлташ калана тăрăх, 93 мăшăр йĕлтĕр, 95 мăшăр коньки пур. Пур ачасене те çитмеççĕ вĕсем. Çакна пула ачасем йĕлтĕрсене общежитине илсе кĕрсе кроватьсе тӳшек айне пытара-пытара хунă. Ятарласа хăмаран тунă тăвайккисем пĕрре кăна мар, ытларах кирлĕ.

Çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парса ӳстересси вăл питех те ответлă тата пысăк ĕç. Çакна шута илсе ĕнтĕ ачасен çурчĕн директцийĕн тата кунти воспитательсемпе учительсен хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

**Т. МАЙОРОВ.**
**Н. МИРОНОВ.**

---

## Çар ĕçне интересленсе вĕренеççĕ

КУКЕÇ. ВКП(б) райкомĕнчи пуçламăш парторганизацинчи коммунистсем çар ĕçне интересленсе вĕренеççĕ. Кружок руководителĕ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ П. Иванов юлташ занятисене план тăрăх, йĕркеллĕ иртерет. Халĕ 14 заняти пулса иртнĕ. Унта 18 коммунист çӳреççĕ. Кружокра вĕренекен коммунистсем халĕ Хĕрлĕ Çăран боевой уставне, винтовка пайĕсене, стройра утма, топографи карттипе усă курма вĕренчĕç. Халĕ ручной пулемет пайĕсене вĕренме пуçларĕç.

**П. Никитин.**

# Яланлăх комиссисен паха ĕçĕсем

ШАХАСАН. Сталинла Конституци тăрăх вырăнти Советсен суйлавĕсем пулнăранпа пĕр çулталăк иртрĕ. Çак суйлавсем хыççăн кашни ялсовет çумĕнчех яланлăх комиссисем ĕçлеме пуçланă. Ялсоветсем çумĕнче районĕнче мĕнпурĕ 82 яланлăх комисси ĕçлесе пырать.

Чылай ялсоветсенчи яланлăх комиссисем аван ĕçлесе пычĕç. Енĕш ялсоветĕнчи бюджет енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси ялсоветне заем сарас тата унăн укçине пухас ĕçре пысăк пулăшу панă. Кунта заем укçине подписка вăхăтĕнчех çурринне яхăн пухнă. Сентябрь уйăхĕнче заем укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ. Бюджет комиссийĕ финанс планне ытти тӳлевсем енĕпе вăхăтра тултарса пырас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçленĕ. Çавна пула Енĕш ялсовечĕ финанс планне кварталтан кварталах ăнăçлăн тултарса пычĕ. IV-мĕш квартал планне вĕсем декабрĕн 20-мĕш тĕлне 118 процент тултарнă.

Ку ялсоветри ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси те лайăх ĕçлесе пырать. Комисси хăйĕн ларăвĕнче ялсоветне кĕрекен колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ общественăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен йышăннă постановлението мĕнле пурнăçласа пынине сӳтсе-явса, ку ĕçре пысăк ситменлĕхсем пурринне палăртнă. Комисси çак ыйтăва ялсовет исполкомĕ умне лартнă. Çакăн хыççăн вăл ситменлĕхсене пĕтернĕ. Енĕш ялсоветĕнчи колхозсенче фермăсем валли выльăх туянас ĕç лайăх пырать.

Шăхасан ялсоветĕнчи бюджет енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси те аван ĕçлет. Çак комисси тăрăшса ĕçленипе ку ялсовечĕ финанс планне ăнăçлăн тултарса пычĕ. Иртнĕ çулсенче кая юлса пынă ялсовечĕ, 1940 çулти IV-мĕш кварталти финплана декабрĕн 20-мĕш тĕлнех 121 процент тултарса, районра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ку ялсовечĕ финанс планне малтанхи кварталсенче те срокченех тултарса пынă.

Çавăн пекех Атнаш, Шуркасси, Çĕнĕ Мами, Энтриял ялсовечĕсенчи яланлăх комиссисем те аван ĕçлеççĕ. Вĕсем ялсоветне хуçалăхлă-политикăллă ĕçсене ăнăçлăн туса пыма пулăшаççĕ. Çак ялсоветне кĕрекен колхозсем кăçал пур ĕçсемпе те малта пычĕç.

**А. СОЛОВЬЕВ.**

---

## Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Енчик Чуллă ялсоветĕнче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 34 çын шутланаççĕ. Вĕсене пурне те учительсем вĕрентеççĕ.

Çавăн пекех Янкас ялсоветĕнче те хутла пĕлменнисене пурне те вĕренĕ-ве явăçтарнă. Кунта кашни учителе уйрăм колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Туллимар вăтам шкул директорĕ Васильев юлташ учительсен ĕçĕсене тĕрĕслесех тăрать.

Хусакасси ялсоветĕнче те хутла вĕрентес ĕç лайăх пырать. Тата Кушар ялсоветĕнчи хутла пĕлменнисене вĕрентме шкул организациленĕ. Шкулта 16 çын вĕренеççĕ.

Анчах çитĕннисене вĕрентес ĕçе чылай ялсоветсенче кирлĕ пек тытăнман-ха. Акă, Мăн Шетмĕ ялсоветĕнче хутла пĕлменнисем 32 çын шутланаççĕ (ялсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ). Вĕсене вĕрентме паян кун та тытăнман. Мăн Шетмĕ ялсоветĕнче интеллигенци 50 çынна çитет. Анчах хут вĕрентес ĕçе тăвас тесе никам та шутламасть. Вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пымасть. Çавăн пекех Мартынкасси, Исаково тата Шурçырма ялсовечĕсем те хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăнман. Алманч ялсоветĕнче те 30 çынна хут вĕрентме явăçтарман, списоксем туса тухнă та лăпланнă.

Хутла пĕлменнисене тата сахал пĕлекенсене пурне те халех вĕрентме тытăнас пулать.

**П. МАЙОРОВ.**

---

## Хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăнман

ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчакки ялсоветĕнче хутпĕлменлĕхе пĕтерме тăрăшмасть. Ялсоветĕнче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 163 çын шутланаççĕ. Вĕсене паянхи куна çитсе те вĕрентме тытăнман.

Хутла пĕлменнисене вĕрентме нимĕнле чăрмав та çук, культурăллă вăй çителĕклĕ. Ку ĕçре пулăшу пама пултараççĕ. Ялсовечĕ çакна шута илсе ĕçлемест, хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçе ертсе пымасть.

**М. Орлов.**

КАЛИНИНО. Ермошка ялсоветне кĕрекен колхозсенче хутла пĕлменнисем 52 çын тата хутла сахал пĕлекенсем 133 çын. Çак хисепрен 30 çынна çеç вĕренĕ-ве явăçтарнă.

Райсутĕç пайĕ хутла пĕлменнисене вĕрентме А. Семенова юлташа янă. Çакăн хыççăн ялсовечĕ те, учительсем те ку ĕçе пĕтĕмпех Семенова çине хунă. Пĕр-пĕринпе сыхăнса ĕçлемен пирки хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăнман.

**А. В.**

---

# Парторганизацисене промышленность еннелле çавăрар!

Шупашкар хулинчи промышленность 1940 çулта çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. 1940 çулта государство промышленноçĕ 1939 çултипе танлаштарсан 13,6 процент ытларах продукци туса кăларнă, кооперативлă промышленность 11,9 процент ытларах туса кăларнă.

Уйрăм предприятисемпе артельсем производствăллă заданисене ăнăçлăн тултарчĕç. Механациленĕ арман, индпошив артелĕ, пĕрремĕш тата иккĕмĕш номерлĕ пекарнисем, «Авторемонт», Ленин ячĕпе тăракан тата «Красный молот» артельсем хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Анчах та чылай предприятисемпе артельсем производство программине тултарас тĕлĕшпе ытла та начар ĕçлерĕç. Ликеро-водочнăй завод, тир-сăран комбиначĕ, макарон фабрики, кирпĕч завочĕ, типографи, «Кожупряжь», «Металлист», «Кооператор» тата «Красный мебельщик» артельсем производство планĕсене тултараймарĕç.

Предприятисемпе артельсем çакăн пек кая юлса пынин сăлтавĕ—вăл парти организацисем, тивĕçлĕ Наркоматсемпе хуçалăх организацисем предприятисене начар ертсе пыни, вĕсем кашни фабрикăна заводăн, артелĕн ĕçĕсене контроллесе тăманни, бюрократла-канцеляристла ертсе пыни пулать. Вырăнти парторганизацисем Наркоматсене кирлĕ пек пулăшу паманни, промышленность предприятийĕсемпе артельсене ертсе пырассинчен аякра тăни, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, чĕртаварпа, оборудованипе тирпейлĕ усă курассишĕн, продукцин хăйне лараканскине йӳнетессишĕн кĕрешменни предприятисемпе артельсен ĕçне лайăхлатма нумай чăрмав кӳнĕ. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ парти организацийĕсене промышленноçпа транспорт еннелле татăклăнах çавăрма вăхăт çитрĕ тени Шупашкар хулинчи кашни парторганизаци, уйрăмăнах ВКП(б) горкомĕ çине пысăк обязанность хурать.

Ку тарниччен хула комитечĕ те, çавăн пекех пуçламăш парторганизацисем те предприятисемпе артельсен пĕтĕм ĕçĕсене пĕлсе тăрса ертсе пыраймаи-ха. Çакна пула предприятисемпе артельсенче ĕçе тĕрĕс организацилемен, технологи процесне пăхăнман, ĕç дисциплинине пăснă фактсене пуçламăш , парторганизацисем те, ВКП(б) горкомĕ те сисмесĕр юлнă. Пуçламăш парторганизацисем социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса ертсе пырас тĕлĕшпе те питех те сахал ĕçленĕ.

Парторганизацисемпе предприяти руководителĕсем производствăна тата производствăллă-техникăллă дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе сахал ĕçленине кăтартакан фактсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулать. Кунта типографине илсе кăтартни те çителĕкĕр.

Типографи уйăхран уйăхах производство планне тултарман. ВКП(б) хула комитечĕ типографи плана тултарас тĕлĕшпе мĕншĕн кая юлнин сăлтавне сăнаса вĕренчĕ. Çакăн хыççăн акă мĕн курăнчĕ. Инженерно-технически работниксем производствăра пулмаççĕ, сакна пула каçхи сменăсенче çитменлĕхсем нумай пулнă. Машинăсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. Техникăллă сăлтавсем пирки пулнă простойсенчен машинăсене тасатнине çу сĕрни 63 процент, «аварийнăй ремонт» 23 процент шутланать.

Предприятисемпе артельсен ĕçĕсемшĕн чи малтан руководитель ответлă. Предприяти директорĕ—вăл тулли влаçлă хуçа. Анчах та ку вăл промышленность предприятийĕсен ĕçĕсемшĕн парторганизацисем ответ тытманнине пĕлтермест. Предприятисемпе артельсен ĕçĕсемшĕн парторганизацисем директорпа пĕртанах ответ тытаççĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти парторганизацисене промышленность предприятийĕсене куллен ертсе пыма кирли çинчен пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. ВКП(б) Центральный Комитечĕн иртнĕ çулти июль уйăхĕнчи пленумĕ, халĕ пулса иртнĕ XVIII партконференци парторганизацисен ĕçне промышленноçпа транспорт еннелле çавăрма хушрĕ. Производство планне тултарассишĕн, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, культурлăхшăн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешесси парторганизацисен кулленхи ĕçĕ пулса тăрать.

Шупашкар хулинчи производствăллă предприятисенчи нумай пуçламăш парторганизацисем çак задачăна çителĕкĕр пурнăçласçĕ-ха. Вĕсем промышленность ыйтăвĕсене çиелтен татса параççĕ, унăн экономикине, технологине, производствăна организацилес ĕçĕн процесне тĕплĕн пĕлмеççĕ.

Кирпĕч заводĕнчи пуçламăш парторганизаци завод ĕçĕсем çинчен çулталăк хушшинче те икĕ хутчен кăна ыйту лартса сӳтсе-явнă. Докладсене те ятшăн кăна лартнă, производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле конкретлă ĕç те туман. Парторганизаци ĕç дисциплинине çирĕплетессине, продукци пахалăхне лайăхлатассине нимĕн те интересленмен.

Водосветри пуçламăш парторганизаци те производство ыйтăвĕсемпе çиелтен кăна интересленет. Предприяти ĕçĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă ятне тăваççĕ те, нимĕн çинчен каламан решенисем йышăнаççĕ, решенисенче директора кăна хуçаççĕ, уйрăм участоксенче ĕçлекен коммунистсене конкретлă ĕçсем тума хушмаççĕ. Бригадăсенче, цехсенче, сменăсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен туса пымаççĕ, производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă ĕç туни çук. Ахальтен мар ĕнтĕ, производствăра йĕркеллĕ ĕçлеме чăрмантаракан тасамарлăх, йĕркесĕрлĕх, япăхлăх нумай предприятисенче пуçпулса тăрать.

Парти организацисем производство ĕçĕсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ пулсан, вĕсен администрацине куллен пулăшмалла, массăсем хушшинче политикăллă тата организациллĕ ĕçе куллен туса пымалла, стахановла движение сармалла, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешмелле, предприятисенче единоначалине çирĕплетмелле.

ВКП(б) горкомĕ предприятисемпе артельсен руководителĕсене тата пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене промышленность ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме кирли çинчен асăрхаттарман мар, асăрхаттарнă. Анчах та çак кăтартусем вĕсем пĕтĕмĕше пулнă, кая юлнă участоксене пĕлсе вĕсене мала кăларма çителĕклĕ пулăшман.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) горкомĕ те, пуçламăш парторганизацисем те предприятисемпе артельсене кăшт лайăхрах ертсе пыма пуçларĕç. Çапла пулин те, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисенчен пирĕн парторганизацисем умне сĕнĕ задачăсем тухса тăраççĕ. Конференци кăларса тăратнă задачăсем парти, совет тата хуçалăх организацисемшĕн малашнехи ĕçсен программи пулса тăраççĕ. Конференци решенийĕсемпе кашни коммуниста, кашни хозяйственника тата кашни рабочине хĕçпăшăллантарса промышленность ĕçне лайăхлатасси — парторганизацисен хисеплĕ задачи пулать. Парторганизацисен ĕçне промышленность тата транспорт еннелле çавăрни тăрăх хуçалăхла тата партиллĕ ĕçсене вăй латмалла.

**М. АНДРЕЕВ.**

---

# Директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕн ролĕ пысăк

Ремонт ĕçĕ график тăрăх пулса пыраймасть. Февралĕн 1-мĕшне 36 трактор вырăнне 27 трактор çеç юсаса кăлартăмăр. Бабит пĕтсе çитрĕ, нефть те нумаях юлмарĕ. Халĕ ĕнтĕ укçа çук, тесе ларма пултараймастпăр. Счет çинче укçа пур. Апла пулин те кирлĕ материалсене туянма май килмест. Бухгалтер çулталăкри отчета çирĕплеттерме кайрĕ те, пĕр уйăх уйăхĕпех Шупашкарта пурăнать. Директор Ельмаков та пиллĕкмĕш кун пурăнать унта. Счет çинче ăлă пусакан çук.

Çакăн пек пулчĕ Çĕрпӳ МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕн малтанхи сăмахĕ. Унтан вăл хăй тăрăшнипе кăна трактористсем валли буфет организацилени çинчен каласа пачĕ.

Хуçалăх ыйтăвĕпе ытларах ĕçленине часах туйса илетĕн. Чăн та хуçалăх ыйтăвĕ вăл—пысăк ыйту. Анчах та хуçалăх ыйтăвне политикăллă-массăллă ĕçпе çыхăнтарса пымасан, кирлĕ пек çитĕнӳ тума çук. Çакна лайăх ăнланать директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Громов юлташ та. — Трактористсемпе комбайнерсем тата МТС-чи ытти работниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пынă май, ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, ĕç тухăçлăхне тата работниксен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстермелле. Анчах та мĕнле организациленĕ-ха кунта политикăллă-массăллă ĕçе? Пуçламăш парторганизацин февраль уйăхĕнчи ĕç планне илсе пăхăпăр. ВКП(б) Обкомĕн 5-мĕш пленумĕн решенийĕсемпе сӳтсе-явма, тĕнчери лару-тăру çинчен лекци ирттерме, ялхуçалăх машинисене юсасси мĕнле пыни çинчен производствăллă канашлура сӳтсе-явма тата ытти ĕçсене те ирттерме палăртнă вăл планра. Çур уйăх иртрĕ, пĕр ĕçне те пурнăçа кĕртмен.

Техникăллă вĕренӳпе политикăллă вĕренӳ мĕнле пынине учета илсе пыма пĕр журнал пекки тунă. Вăл журналтан çакна куратăн: 1940 çулти декабрь уйăхĕнченпе техникăна вĕренмелли кружок занятийĕ виçĕ хут кăна пулса иртнĕ, политика ыйтăвĕсемпе трактористсем хушшинче пĕр калаçу та ирттермен. Халĕ трактористсен аттестацийĕ пырать. И. Гаврилов, И. Карышев зачет тытайман. Техникăна вĕренмелли кружок ĕçленĕ пулсан çавăн пек пулас çукчĕ ĕнтĕ.

Директор заместителĕ калана тăрăх, коммунистсем парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Мĕнле пыратьха вĕренӳ, уйрăм коммунистсене мĕнле пулăшу кирлĕ? Çакна тĕрĕслесе пĕлмен.

МТС-че стахановецсемпе ударниксем—малта пыракан çынсем сахал мар. Вĕсем хушшинче парти организацийĕ тивĕçлипе ĕçлесе пымасть. Политикăллă ăнланăва тата производствăллă квалификацине ӳстерме куллен пулăшса пыни çук. Çакна пула ĕнтĕ иртнĕ çулта пĕр тракториста та парти ретне илмен.

Политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе йĕркелеменни лайăх мар результатсем патне илсе пырать. Ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта тăмасть. Çак çула кĕрсен те ĕç дисциплинине пăсакансем пулкаланă. И. Никифоровпа Д. Егоров трактористсене прогул тунăшăн судпа айăпласа юсанмалла ĕçлеттермелле туни. А. Васильевпа И. Степанов хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен пăрахса кайнă. Директци темиçе хут чĕнсен те вĕсем тракторсене юсаман, МТС-че ĕçлеме пыман. Çакăншăн судна айăпласа лаккĕпине те тĕрмене хупса лартнă.

МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕн ĕçри вырăнĕ пысăк. Унăн работниксене ĕç сине социализмла пăхма вĕрентмелле.

Работниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçшĕн вăл ответлă. Политикăллă-массăллă ĕçе туса пыни пĕтĕм ĕçе лайăхлатма пулăшать.

**Т. М.**

# ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене чыслăн пурнăçа кĕртер

## Малтанхи результатсем

КАНАШ. Чугунçул станцинче тата депора ĕçлекенсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ тунă доклада тулли кăмăлпа, пысăк хастарлăхпа вĕренеççĕ.

— Маленков юлташ, — тет депори паллă стахановец токарь Тарасов юлташ, — предприятисемпе цехсенчи тирпейçĕрлĕх çинчен ытла та тĕрĕс кăтартса панă. Пирĕн депора та станоксем патĕнче, коридорсенче ăпăртăпăр, тимĕр-тăмăр касăкĕсем йăванса выртнине курма пулать. Ку вăл депори ĕçе тĕрĕс организацилеме кансĕрлет тата ĕç вăхăчĕпе туллин усă курма чăрмантарать. Депора халех, вăхăта вăраха ямасăр, тасалăх тата йĕркелĕх туса хурас пулать. Унсăрăн тухăçлă тата брак тумасăр ĕçлеме май çук. Эпĕ хамăн станока яланах тирпейлĕ тата таса ураттăп. Çавăнпа ĕç нормине кулленех 338 процент е ытларах та тултарса пыракан пултăм.

Депо коллективĕ Маленков юлташăн докладне вĕреннĕ май, депора тасалăх тата тирпейлĕх туса хурас тĕлĕшпе малтанхи утăмсем турĕ. Ещ вырăнне, оборудованине, инструмента тата чĕртавара тирпейлĕ тытассишĕн депора ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçланнă.

Ĕçрен тавăрăннă паровозсене тасалăхра тытас тĕлĕшпе Прокофьева тата Назарова активисткăсем ертсе пыракан килхуçи арăмĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Партин XVIII конференцин материалĕсене вĕреннĕ май, депо коллективĕ хăйĕн ĕçне чылай вăйлатрĕ. Слесарь Чеботарев тата Романовпа Абросимов токарьсем производство планне куллене 200—210 процент тултарса пыракан пулчĕç. Вĕсем ĕçре брак тумаççĕ. Çавăн пекех машинист-кривоносовецсем Ф. Тимофеев, Назаров, Чапаев юлташсем те йывăр составлă поездсене ăнăçлăн илсе çӳретеççĕ.

Чугунçул станцинче ĕçлекенсем те производствăра пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Акă, станци дежурнăйĕ Петр Нужин юлташах илер. Вăл Иккĕмĕш Канаш станцинче малта пыракан комсомолецсен сменине ертсе пырать. Нужин юлташ ертсе пыракан смена поездсене станцăран яланах график тăрăх кăларса ярать, расписани тăрăх кĕтсе илет.

Вĕсем ĕçлекен çĕрте яланах таса, тирпейлĕ, кашни япала хăйĕн вырăнĕнче.

Старший стрелочник Хитров юлташ чугунçул транспортĕнче 1918 çултанпа ĕçлет. Вăл стрелкăна яланах тасатса çу сĕрет тата чугунçул çинчи юрата тăтăшах шăпăрпа шăлса тасатса тăрать. Будки те унăн — яланах таса, тирпейлĕ. Хитров айăпĕпе авари тата крушени пĕрре те пулман. Хитров юлташ çамрăк стрелочниксене тасалăха, тирпейлĕхе вĕрентет.

Канаш станцин ремонтлăй мастерскойĕнчи тимĕрçĕсем Моклаков тата Игнатьев юлташсем, молотобоецсем Феклин, Григорьев юлташсем куллене ик-виçĕ норма тултарса ĕçлеççĕ. Маляр Андреев нормăна 350—360 процент тултарать.

**П. НИКОЛАЕВ.**

## Станцири ĕçсем аванланаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Чугунçул станцинче ĕçлекенсем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин материалĕсемпе питех те интересленеççĕ. Вĕсем ĕç пĕтнĕ хыççăн хĕрлĕ кĕтесе е конторăна пухăнса конференци материалĕсене тĕплĕн сӳтсе-явaççĕ. Пуçламĕш парторганизаци участоксем çумне агитаторсем çирĕплетсе тухнă. Грузчиксем хушшинче Бодеев, товарнăй конторăра Филиппова, лини çинче ĕçлекенсем хушшинче Кострыгин юлташсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

— Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче чугунçул станцинче тасамарлăх тата ытти çитменлĕхсем çинчен питех те тĕрĕс калать. Ку вара пире те тивет. Эпир пассажирсене кирлĕ пек условисем туса паман-ха. Вокзалта сивĕ, вăхăтра тасатса тăмаççĕ. Çак çитменлĕхсене çитес вăхăтрах пĕтеретпĕр ĕнтĕ, —терĕ станцири пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Шапков юлташ.

Партконференци ячĕпе рабочисем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Амăртура Кострыгин юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Бригада простойсăр, авариссăр ĕçлет. Халĕ çав бригада лайăх ĕçленĕшĕн Хусан чугунçулĕн тăваттăмĕш дистанцин куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне илнĕ.

**Х. ЛИСИН.**

## Культурăллă ĕçлеме вĕренес пулать

ЕТĔРНЕ. Çу заводĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ тунă доклада пысăк хаваслăхпа вĕренеççĕ. Рабочисем завод ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене тупса палăртаççĕ. Иртнĕ çулта завод управленийĕ государство пурлăхне тирпейсĕр тытнине пула 672 пин тенкĕлĕх топливо, 295 пин тенкĕлĕх чĕртавар ытлашши расходланă.

Халĕ рабочисем чĕртавара, топливăна тирпейлĕ тыткаласситĕн, культурăлăхшăн чăннипе кĕрешӳ пуçарса ячĕç.

**Т. Ярандайкин.**

ÇĔМĔРЛЕ. «Большевик» заводри пур цехсенче те агитаторсем Маленков юлташ докладĕ тата партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисем çинчен рабочисене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Маленков юлташ докладне заводăн автопаркĕнче ĕçлекен рабочисем хушшинче сӳтсе-явнă чухне рабочисем производствăра культурăллăх çукки çинчен, ĕç хатĕрĕсем час-часах цехра ăçта килчĕ унта выртса çӳрени çинчен туха каларĕç. Ĕç хатĕрĕсене шыраса çӳренипе ĕç вăхăчĕ сая каять,— тесçĕ вĕсем.

— Машинăсем валли горючи илсе, ăна варинкесĕрех тултаратпăр. Çавна пула горючи нумай тăкăланать, — тесçĕ рабочисем.

Гаражра тасалăх çук. Пăс каякан трубана тĕплĕн питĕрмен пирки гаражра яланах нӳрĕ тăрать. Ăçта килчĕ унта пушă баллонсем выртаççĕ, вĕсем ĕçлеме кансĕрлеççĕ.

Маленков юлташ докладне скумпи цехĕнче сӳтсе-явнă чухне рабочисем цехра та, унăн тулашĕнче те тĕрлĕ детальсем,чăптасем, михĕсем выртакласа çӳренине палăртрĕç.

— Хамăран ĕç вырăнне культурăллă тытасси пирĕнтен килет. Пирĕн культурăллă ĕçлеме вĕренес пулать, совет предприятийĕнче культурăсăрлăх пулмалла мар, — çапла калаççĕ вĕсем.

Ĕç вырăнĕ культурăллă пулни ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Çакна кашни рабочи асра тытмалла.

**Н. Иваницкий.**

# Вăрман хатĕрлевĕнче

ШАМАРША. «Красный партизан» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ. Иртнĕ кварталта вĕсем плана тавата хут ирттерсе тултарнă. Пĕрремĕш кварталти плана та вĕсем ытлашшипех, срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Çавăн пекех ку районри «Правда» колхоз членĕсем те аван ĕçлеççĕ. Вăрман кăсакан А. Луферов, вăрман турттаракан П. Ушаков т. ыт. те темиçе кунлăх норма тултарса пиншер тенкĕ çулла ĕçукçи илнĕ.

**А. Алексеев.**

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Путь Ленина» колхозра вăрман касма уйрам бригада тунă. Бригада лайăх ĕçлет. Г. Садовников, В. Петров, В. Федоров колхозниксем хăйсен кулленхи ĕç нормисене 140—150 процент тултарса пыраççĕ.

**Ф. Петров.**

СОВЕТСКОЕ. «Красный Октябрь» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнче январь уйăхĕнче 20 çын ытларах ĕçленĕ, февралĕн малтахни кунĕсенче 30 çын ĕçлеме тухса кайнă. Вĕсем валли унтах пĕрле апатланассине йĕркеленĕ. Вăрманта ĕçлекен колхозниксем патĕнче агитаторсем калаçусем иртереççĕ.

**А. Малов.**

ВĂРНАР. Молотов ячĕпе тăракан колхозран вăрман хатĕрлеме 60 çын тухса кайнă. Вĕсем хăйсен ĕçне хастарлăн туса пычĕç. Пĕрремĕш квартал планне вăрман касас тĕлĕшпе колхоз 110 процент тултарчĕ. План тăрăх 766 кубометр хатĕрлемелле пулнă, 847 кубометр хатĕрленĕ. Вăрман хатĕрлес ĕçре уйрăмăнах А. Михеев, Г. Григорьев, М. Степанов тата ыттисем те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Халĕ вăрман турттарас плана тултарассишĕн тăрăшаççĕ.

**П. Трофимов.**

## Вăрман хатĕрлес плана тултараççĕ

ИШЛЕЙ. Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн (Сыбайкасси ялсовечĕ) пурĕ 2.200 кубометр вăрман касса турттарса памалла. Колхоз çак плана халĕ 60 процент ытла тултарнă. Вăрман хатĕрленĕ çĕрте уйрăмăнах И. Бочкарев, А. Окунев, Н. Грибов колхозниксем яланах кулленхи нормăна 120—130 процент таран тултарса пычĕç. Колхоз председателĕ П. Бычков вăрман хатĕрлес плана тултарассишĕн хытă тăрăшать.

Сыбайкасси ялсоветне кĕрекен ытти колхозсем те вăрман хатĕрлевне аван хутшăннă, вĕсем те ку тĕлĕшпе хăйсен планне çурри ытла тултарнă. «Вускасси» колхоз вăрманта ĕçлекенсем валли пĕрлешсе апатланассине йĕркеленĕ.

**С. Мамаев.**

## Партконференци решенийĕсене сӳтсе-явaççĕ

ВĂРМАР. Спортинвентарь фабрикинче рабочисем хушшинче Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцин материалĕсем çинчен ăнлантарса парас ĕç анлăн сарăлса пырать. Кашни цехрах рабочисем хушшинче Маленков юлташ докладне вуласа панă. Цехсенче ирттернĕ каласусенче пурĕ 171 çын пулнă. Рабочисем фабрикăри çитменлĕхсене палăртаççĕ, Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче кăтартса панă çитменлĕхсем пирĕн патăрта та пур, теççĕ. Вĕсем малашне лайăхрах ĕçлеме, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç дисциплинине çирĕплетме пулаççĕ.

**Васильев.**

## Культсбор тата самообложени уçсине тӳлесе татрĕç

ШАХАСАН. Ухман ялсоветне кĕрекен «Ямурза» колхозри колхозниксем кăçалхи çулăн тӳлемелли самообложени тата культсбор укçине 100 процентĕпех парса татрĕç.

**И. Нестеров.**

# Район центрĕнчи колхозра

Иĕпреçри колхоз ăпăх ĕçлени çинчен районра аван пĕлеççĕ. Колхоз çинчен сăмах тапратсан: çаппа çав, унта ĕçсем ăпăх, тесе сăмаха вĕçлеççĕ.

Колхозра хĕллехи агромероприятисене пурнăçлама тытăнманна пĕрех. Сакăр гектар çинче юр тытам пекки тунă та, 58 гектар çинче юр тытрăмăр, тесе сводка парса лараççĕ. Вăрлăх пахалăхĕ питĕ начар: тулă вăрлăхĕ ытлашши нӳрĕ пулнă пирки унăн шăтас пахалăхĕ 35 процент анчах шутланать, ăна тасатман, 343 центнер пăрça пĕтĕмпех пăрланса хытса ларнă. Паллах, ку вăрлăха халех типĕтме тытăнмасан, çуркуннехи ăшă çанталăкра çĕрсе кайма пултарать. Амбарти вăрлăха лавĕпе вăрласа кайсан та паллиех пулас çук, хăшпĕр амбарсем тахçантанпах пĕр питĕрĕнмесĕр тăнă.

Ялхуçалăх машинисем, урапасем пахнăи кун та ăçта килчĕ унта сапаланса, тарăн юр айĕнче юхăнса выртаççĕ. Машинăсене усрамалли сарай тума тытăннă, анчах вăл çийĕсĕрех арканса ларать.

Хуçалăха чипер тытса пыманни çакăнтан та паллă: 3—4 çул каярах колхоз пысăк мунча туса лартнă. Çак мунчана кĕме юрăхлă туса çитерсенех, колхоз руководителĕсем çăмăл шухăшлă пулнипе мунчаран пекарня туса лартаççĕ. Вăхăт нумай-и, сахал-и иртет, мунчаран часах чăх-чĕп усрамалли çурт пулса тăрать.

Колхозра сад, пахча-çимĕçсем ĕрчетме пур условисем те çителĕклĕ. 17 гектар çинче сад тăвас тесе панулми йывăççисем кӳрсе килнĕ. Сад тăвас тесен, карта тытса çавăрмалла, апла пулсан та ăна валли вăрмантан йывăç кăларма тытăнман. Хуçасăрлăх пирки киех иртнĕ çулсенче лартнă сада выльăхсем кăшласа янă. Пĕр гектара яхăн лайăх сортлă улмуççисем ирĕкрех лараççĕ.

Ирхи пахча-çимĕçсене тăвас ĕç майĕпен пулса пырать, парник рамисене тума, улăм ашăксене çыхма тытăнман, пахча-çимĕç вăрлăхĕсене тупма шутламаççĕ.

Колхоз ĕçне лайăх майласа ярас, хуçалăха пысăк тупăшлă туса, колхозниксен пурнăçне лайăхлатас тесен, колхоз председателĕн ĕçе юратни, темиçе çул пĕр улшăнмасăр ĕçлени кирлĕ. Колхоз председательне авторитетлă, тӳсĕмлĕ, йывăрлăхсенчен хăраман, колхоз пурнăçĕшĕн чунтан тăрăшакан, тӳрĕ кăмăллă çынсене сӳйласа лартмалла. Çак енчен кунта питĕ пысăк çитменлĕх пулнă вара. Кашни çулах тенĕ пек колхоз председательне улăштарса пынă. Вĕсенчен хĕшĕ-пĕрисем колхозшăн мар, хăйсен интересĕсемшĕн анчах тăрăшнă.

Председатель пулса ĕçленĕ Марков колхоз пурлăхне салатма тытăннă, хуçалăха пĕтĕмпех юхăнса каякки патне илсе çитернĕ пулнă. Унăн ĕçне тĕрĕсленĕ хыççăн, вăл 5 пин тенкĕ ытла растрата туни палăрнă. Анчах та паянхи куна çитсе те Маркова ответ тыттарас тесе ĕçе суд аллине паман. Марковăн жуликла ĕççем чылай, ун çинчен колхозниксем аван пĕлеççĕ, ревизи комиссине жалобăсем параççĕ, анчах ревизи комиссийĕ хутша çырса паман тата документсем çинче палли çук тесе, фактсене пытарса усрать. 1940 çулта пăрça вăрлăхне пĕрчĕн сӳйласа тасатма колхозниксене килĕрен панă пулнă. Çак пăрçана Антон Алексеев колхоза каялла паман, хăйĕн пĕлĕшне, единоличнике акма панă.

Хальхи вăхăтра колхоз председательне тракторист пулса ĕçленĕ Слаборуков юлташа сӳйланă. Ăна колхоз активĕн пулăшса пыни кирлĕ, ку тĕлĕшрен ĕç кал-кал пырать теме çукха. Акă февралĕн 8-мĕшĕнче кладовщик Пегашкин пĕлми ӳсĕр пулнă. Тырă тасатма тухнă ултă колхозница Пегашкина кĕтсех пĕр кун усăсăр ирттернĕ. Ăна пыраса тупма та хĕнмĕн, вăл пыраса ан тупчăр-ха тесе çын патне кайса ĕçет. Ахальрен мар ĕнтĕ вăрлăха тасатас ĕç калама çук çын патне кайма пултарать. Пегашкин енчен кун пекки татах та пулнă пулин те нимĕнле мера та йышăнман.

Колхозра ĕç дисциплини начар. Нумайĕшĕ ĕçе хутшăнманна пĕрех, çапах та вĕсем колхозниксен шутĕнче тăраççĕ, тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе усă курраççĕ. Колхоза кĕмен хуçалăхсене колхоза кĕртес пирки нимĕнле агитацилĕ ĕç те курăнмасть. Колхозниксем хушшинче культурăллă ĕç çук.

Иĕпреç колхозĕнчи ĕçсене тĕпренех лайăхлатмалла. Малашне те кун пекех хăварсан, колхоз татах пысăк йывăрлăхсем патне пырса тăма пултарать. Колхоз ĕçне, районри руководительсем татăклăн хутшăнмасан, тӳрлетме йывăр.

**Вас. ЗАХАРОВ.**

## Двигатель усăсăр ларать

Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозра (Калининский р.) двигатель пур. Ку двигателе арман авăртма майлаштарса лартнăччĕ. Пĕр-икĕ уйăх ĕçленĕ хыççăн двигатель çĕмĕрлесе кайнă. Çакăн пирки арман нумай вăхăт хушши ĕçлемест.

Колхозра урăх арман çук. Колхозниксем хăйсен тыпрулне авăртма инçетри армансене çӳреççĕ. Çакна колхозправлени шута илмест, двигательпе усă курмаççĕ.

**А. Владимиров.**

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз членĕн Трофим Филиппович Трофимов юлташăн килкартинче районри пĕртен-пĕр хура пӳрт сыхланса юлнă. Т. Ф. Трофимов юлташ çав пӳртре, патша Российĕнче чăваш хресченĕсен ĕçхатĕрĕсене тата килçуртра усă курса пурăннă япалисене пухса музей уçнă. Хура пӳртпе юнашар—халĕ хăй пурăнакан çĕнĕ çурт.

А. Скурихин фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

## Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

# Колхозсенчи ледниксемпе нӳхрепсем çинчен

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсенче общественăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен» тата «Ялхуçалăх продуктисен заготовкисемпе закупкисене ирттерес политикăри улшăнусем çинчен» йышăннă постановленисене Чăваш республикинчи колхозсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă никĕс çинче общественăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ, çавăн пекех аш-какайпа сĕт-çу, пахча-çимĕç тата ытти продуктсем чылаях ӳсрĕç. Çавна май выльăх-чĕрлĕх продуктисене уйрăмăнах çуллахи вăхăтра лайăх, пĕр пăсмасăр пăхса усрассине тĕрĕс организацилесси пысăк выгăн пăшăнса тăрать. Анчах халь нумай колхозсенче ледниксемпе нӳхрепсем çуккипе выльăх-чĕрлĕх продуктине сыхласа усрассине çителĕксĕр организациленĕ.

Колхозсенче аш-какайпа сĕт-çу тата апат-çимĕçсен ытти продуктисене пăхса усрассине тĕрĕс организацилес шутпа Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ 1941 çулта республикăри колхозсенче ледниксемпе нӳхрепсем тăвасси çинчен постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени тăрăх 1941 çулти августăн 1-мĕш тĕлне 351 ледник туса пĕтермелле.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсоветсен исполкомĕсене тата колхоз правленисене 1941 çулти мартăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пур пек ледниксемпе нӳхрепсене пăр турттарса тултарма тата кашни колхоза çуркунне пулнă çĕрте 1—2 нӳхрепрен кая мар юр тултарма хушнă.

Ледниксемпе нӳхрепсем çук колхозсенче пăра çĕр чавса хурассине организацилес пулать.

Ледниксемпе нӳхрепсем тумалли плана пурнăçа кĕртессишĕн тата вĕсене пăр тултарассишĕн ответлăха районсенчи çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе колхоз правленийĕ председательĕсем çине хунă.

Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене çак решение мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине яланах тĕрĕслесе тăма хушса хăварнă.

## Пахча-çимĕç мастерĕн опычĕсене вĕренеççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Колхозсенчи пахча-çимĕç лартса тăвакансен квалификацине хăпартас шутпа, ВКП(б) райкомĕ райçĕрĕç пайне овощеводсен районри курсĕнче вĕренекенсене «Çăлтăр» колхозри пахча-çимĕç мастерĕн, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки участникĕн А. Кошкин юлташăн ĕç опычĕсемпе паллаштарма хушнă.

Аркадий Кошкин кашни гектартан 380 центнер хăяр, 360 центнер купăста, 5,6 центнер хăяр вăрри, 140-шер центнер сухан туса илни çинчен виçĕ кун хушшинче лекци вуласа панă. Курсра вĕренекенсене Кошкин юлташăн опычĕсем питĕ интереслентерчĕç. Кошкин юлташ иртнĕ çул мĕнле майпа гектартан 120 центнер арбуз тата дыня туса илни çинчен, уйрăмăнах пысăк тухăçлă пахча-çимĕççем туса илес ĕçре тунă хăйĕн опычĕсем çинчен каласа панă.

**Ф. Архипов.**

## Колхоза кĕреççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Юлашки вăхăтра Яндаш ялĕнче 12 хуçалăх, Егоркино ялсоветĕнче 9 хуçалăх колхоза кĕчĕ. Вĕсем колхоза кĕнĕ хыççăнах коллективлă хуçалăхра активлăн ĕçлеме тытăнчĕç.

**Д. Анисимова.**

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Чурачăкри «Светлая жизнь» колхоза 16 хуçалăх кĕчĕç.

**П. Корнилов.**

# КИЕВ

Ку хула ятне асăнсан, пирĕн аслă çĕршывăн авалхи историйĕ аса килет. Историне илсе пăхсан, пирĕн çĕршыв Киевран шăтса тухса, хальхи вăсене çити сарăлнăн курăнать. Киев—чи авалхи хуласенчен пĕри. Вăл пысăк суту-илӳ центрĕ пулнă вăхăтра Мускав та, Минск та, Ленинград та т. ыт. пысăк хуласем те пулман. Киев Руçĕ вăхăтĕнче Киев Çурçĕрти Новгород вырăс çĕршывне Хĕвеланăç Европăпа çыхăнтарса тăнă.

Киевăн историри вырăнĕ калама çук пысăк, ун урлă Российăна хĕвеланăç культури килнĕ. Эпир хамăр çĕршывăн авалхи историне Киев летописĕ тăрăх çеç пĕлме пултаратпăр. Çак чаплă хула çĕршыври пĕтĕм культурăллă вăя пĕрлештерсе тăнă. Çырулăх, искусствăпа литература тата историне çырса пырасси Киевра пуçланнă.

Акă Днепр хĕрринчен Крещатикĕ улăхнă çĕрте, чăнкă ту çинче Владимир Князь хреспе тăрать. Хула ăрешĕ вырăнне çеç шутласан, ку памятник нимпе те ытлашши чаплă мар, тĕксĕм пилăк çеç. Ку памятник пысăк пĕлтерĕшлĕ. Аслă князь Владимир Киев хăнăхне Днепрта шыва кĕртнине пĕлтерет вăл. Христианство тĕнне йышăнтарни те хăй вăхăтĕнче прогрессивлă явлени пулнă.

Çуллахи ăшă вăхăтра Днепр çинчи туханов утравĕ çине пăхатăн та, вăр палăрми халăх выртнине тата шывра чăпăлтатнине куратăн, шутлатăн вара:

— Владимир тĕне кĕртнĕ чухнехи пекех кунта, тетĕн. Труханов утравĕ— курортри пек чаплă вырăн. Киев халăхĕ канма, шыва кĕме, сиплĕ хăйăр çинче хĕртĕнсе выртма каçать.

Пляжа питĕ лайăх йĕркеленĕ: тумăрсене, кĕпе-йĕмсене упракан вырăнсем, хывăнса-тăхăнмалли пӳлĕмсем, çимăт-çимĕç тата ĕçмелли шывсем сутмалли киосксем тата ресторан та пур. Пляжа пĕрмаях шăлса тасатса тăрасçĕ. Кăмăл пулсан тата тăрăшсан, тем те тума пулать çав пирĕн ирĕклĕ çĕршывра!

Эпĕ час-часах хамăран инçетри Шупашкартан инçетре. Халĕ эпĕ ун çине инçетрен пăхса, Киев хулине танлаштаратăп. Калăпăр, япала, хăйне уйрăмăн илсе пăхсан, ытарма çук илемлĕ те килĕшӳллĕ. Тепĕр пахарах япалапа танлаштарса пăхсан, çав малтан, ытарма çук илемлĕ пулнă япалан çитменлĕхне куратăн. Эпĕ çавăн пек танлаштарса пăхнă хыççăн, çапла каласшăн: мĕншĕн Атăл леш ъенче Чăваш республикин столицийĕ тĕлĕнче лайăх йĕркеленĕ культурăллă пляж тумалла мар? Ăна тума мĕн çитмест? Вăрман сăмса айĕнче кашласа ӳсет, шывĕ те куçпа виçсе илми анлă, хăйăрĕ те таса. Тата мĕн çитмест? Шупашкар хула Совечĕ тăрăшни çитмест, тесшĕн эпĕ.

Эпир ытти вырăнсенчи çынсем ямăтланă курортсемпе кану çурчĕсене кайса çӳреме вĕреннĕ, хамăр патăрта курорт тума тăрăшмастпăр. «Курорт» сăмах—тĕнчери пит сайра тĕлпулакан хаклă чул ячĕ пек. Вăл патша Российĕнче чăнах та çапла пулнă, мĕншĕн тесен ун чухне курортсем сахал пулнă тата вĕсемпе ĕççыннисен массисем хальхи пек усă курма пултарайман.

Совет влацĕ ĕççыннисен сывлăхĕшĕн тăрăшать, мĕншĕн тесен «этем пирĕн çĕршывра чи хаклă пурлăх». Пирĕн çĕршывра çултан çул çĕнĕ курортсем—пысăккисем те, пĕчĕккисем те — уçăлса пыраççĕ: ăçта майлăрах вырăн пур, çавăнта—курорт. Ман шутпа Шупашкар тĕлĕнчи Атăл леш ъенĕ хула ĕççыннисен канупа сиплĕх вырăнĕ пулмалла.

Çакăн пек шухăшсем килчĕç пуçа, Киев тĕлĕнчи Труханов утравне курсан. Киев—ытарми илемлĕ хула, çулла вăл пушшех илемлĕ—илемлĕ садпаччи пек курăнать. Киевшĕн иртнĕ ĕмĕрсенче те, пирĕн вăхăтра та çапăçусем пумай пулнă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче Киев аллăран алла куçса тăнă. Интервенци çарĕсем таптанă Украинăн чĕрине—Киев хулине.

Кунта кĕçеннĕ вăрçă учĕсем,
Вĕçтернĕ вăрçă сывлăша вут-çулăм.
Аркатрĕ тăшмансен вăйне хăюллăн
Совет аллийĕ, çирĕп вăй илсе.
Тăшман айлатрĕ те час лăпсăртатрĕ,
Йӳтенĕ кашкăр евĕр, каялла.
Тĕрмесене йăл мăлатук аркатрĕ.
Çав кĕллĕ вырăнта паян хула
Хальччен пулман керменсемпе
йышланчĕ,

Вăл Днепр çийĕн çамрăккăн çуталчĕ,

тесе çырать Украина поэчĕ орденоносец Максим Рыльский. Киева ватă, чунĕпе çамрăк çынпа танлаштарас килет. Революци хыççăн пирĕн çĕршывра халиччен ним те пулман вырăнсенче нумай хуласем çитĕнсе ларчĕç: ĕлĕк кашкăрсем çеç уланă вырăнсенче халĕ рабочисене ĕçе тухма чĕнсе фабрик-заводсем хăватлăн уласçĕ. Киев—революци вучĕсем витĕр тухса çĕнелнĕ хула, совет влацĕ пулнă хыççăн унăн сăн-сăпачĕ йăлтах улшăннă.

Киевра промышленность, революцичченхипе танлаштарсан, 18 хут ӳснĕ. Вунсакăр хут! Вунсакăр хут ӳснĕ Киевăн вăй-хăвачĕ! Пурăнмалли çурт-çĕр площачĕ 3.304.100 квадратлă метра çитнĕ. Сталинла пятилеткăсен вăхăтĕнче 445.369 квадратлă метр эксплоатацине панă.

Киев çулран çул илемленсе, якалса тата çирĕпленсе пырать. Днепрăн Киев тĕлĕнчи çыранне бетонланă. Халĕ Киев çĕрне харсăр Днепрăн шăлĕ витеймест, унччен вăл Киева илем кӳнипе пĕрлех сиен те нумай кӳнĕ. Çуллен темĕн чухлĕ çĕре иште-иште путарса, чаплă хула çине тапăнса пынă.

Эпĕ пĕр поэт «Днепр шывĕ таса мар, Днепр шывĕ юнлă» тесе çырнине аса илтĕм. Чăнах та, мĕн чухлĕ юн юхман пулĕ Киев аллăран алла куçса тăнă вăхăтра! Авă Днепр çыранĕ çинче пĕр пĕчĕк шырлан урлă хунă пысăках мар кĕпер курăнать. Çав кĕпер çинче Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем Киева юлашки хут тата яланлăхах илнĕ чухне Петлюра çарĕпе штык вĕçсĕн тытăçса çапăçнă. Петлюровецсем Киевпăн çирĕп тăнă, тата та çирĕпрех тăнă красноармеецсем, çавăнпа та вĕсем интервенци йыттисене çĕнтернĕ, Киева ирĕке кăларнă.

Киевшăн икĕ вăй çапăçнă чухне хула ĕççыннисем мĕнле позици тытнине кăтартма пĕр пример çеç илетĕп. Киев вокзалне петлюровецсем йышăнса илнĕ, вĕсем тимĕр ещĕкрен почта работникĕсем валли кирлĕ револьверсене илесшĕн пулнă, анчах ещĕкĕн ушкăн пулман пирки вĕсен операцийĕ тытăнса тăнă. Паллах, петлюровецсем тимĕр ещĕке бомба пăрахса çĕмĕрмĕ пултарнă, анчах вĕсем апла тăвасшăн пулман, револьверсене хăйсене валли тĕрĕс-тĕкĕлĕн илесшĕн пулнă.

— Уçă камра?

— Заведующире!

Çав вăхăтра вокзал çуртĕнче шухăша кайса пĕр рабочи Иван Целуйко çӳренĕ. Вăл хĕçпăталсене тăшман илесрен çăлса хăварма тăрăшнă. Петлюровецсене:

— Уçă—заведующире, эпĕ вăл ăçта пурăннине пĕлетĕп. Айтăр, илсе каятăп сире,—тенĕ Целуйко. Петлюровецсем килĕшнĕ. Целуйко вĕсене юри вăхăта ирттерес шутпа, тавраран илсе çӳренĕ. Целуйкон чеелĕхне туйса илсе, петлюровецсем ăна тискеррĕн вĕлернĕ. Çав вăхăтрах Соломенка енчен Хĕрлĕ Çар чăсĕсем тапăнса пынă. Вокзалри револьверсен склачĕ упранса юлнă.

Целуйко, тăван çĕршыва, хăйĕн производствине, хăйĕн ĕç вырăнне юратнипе Иван Сусанин пек вилнĕ. Ку пысăк факт мар, анчах та хула ĕççыннисем совет влацĕшĕн мĕн пек çирĕп тăнине лайăх кăтартса парать. Ку пĕчĕк пример пулсан, «Арсенал» заводăн обороницине илер. Ку завод Хĕрлĕ Çар Киева иличчене Петлюра çарĕпе çапăçнă.

Кусем 22 çул каялла пулнă героикăллă фактсем. Халĕ Киев хули тăрăх çӳренĕ чухне çав хĕрӳллĕ çапăçусенче совет влацĕшĕн хăйсен пусне шеллемен паттăрсене аса илтереççĕ «Братская», «улица героев Триполья» тата ытти çавăн евĕрлĕ урамсем. Паттăрсем вилнĕ вырăнсенче фабрик-заводсем тата нумай хутлă çуртсем ӳсе ларнă халĕ.

Хула ĕççыннисем вилнĕ паттăрсене чыслăн асăнса пурăнаççĕ. Киевра тухса тăракан хаçатсем час-часах геройсен тăванла çăвисем патĕнче митингсем пуçса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Акă «Советская Украина» хаçат юлашки вăхăтра пичетленĕ пĕр информаци:

«Ĕнер, январĕн 28-мĕшĕнче, ытти улсенчи пекех, Киев ĕççыннисем 1918 çулти январьти восстанире вилнĕ геройсен тăванлă масарĕ патне пухăнчĕç. Машиностроительсен, железнодорожниксен тата ытти предприятисен представителĕсем шурă юрпа витĕннĕ масар çине хĕрлĕ розăран тунă венок сем хучĕç».

Малалла хаçат митингра 1918 çулти январьти восстанин участникĕсене — вилнĕ паттăрсене асăнса сăмахсем тухса калани çинчен çырать.

Çавăн пек информацисемпе юнашарах эпир çĕнĕ çуртсем туни çинчен, фабрик-заводсем хăйсен планне срок-хăта ирттерес шутпа, тавраран илсе çӳренĕ. Целуйкон чеелĕхне туйса илсе, петлюровецсем ăна тискеррĕн вĕлернĕ. Çав вăхăтрах Соломенка енчен Хĕрлĕ Çар чăсĕсем тапăнса пынă. Вокзалри револьверсен склачĕ упранса юлнă.

Целуйко, тăван çĕршыва, хăйĕн производствине, хăйĕн ĕç вырăнне юратнипе Иван Сусанин пек вилнĕ. Ку пысăк факт мар, анчах та хула ĕççыннисем совет влацĕшĕн мĕн пек çирĕп тăнине лайăх кăтартса парать. Ку пĕчĕк пример пулсан, «Арсенал» заводăн обороницине илер. Ку завод Хĕрлĕ Çар Киева иличчене Петлюра çарĕпе çапăçнă.

Кусем 22 çул каялла пулнă героикăллă фактсем. Халĕ Киев хули тăрăх çӳренĕ чухне çав хĕрӳллĕ çапăçусенче совет влацĕшĕн хăйсен пусне шеллемен паттăрсене аса илтереççĕ «Братская», «улица героев Триполья» тата ытти çавăн евĕрлĕ урамсем. Паттăрсем вилнĕ вырăнсенче фабрик-заводсем тата нумай хутлă çуртсем ӳсе ларнă халĕ.

Хула ĕççыннисем вилнĕ паттăрсене чыслăн асăнса пурăнаççĕ. Киевра тухса тăракан хаçатсем час-часах геройсен тăванла çăвисем патĕнче митингсем пуçса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Акă «Советская Украина» хаçат юлашки вăхăтра пичетленĕ пĕр информаци:

«Ĕнер, январĕн 28-мĕшĕнче, ытти улсенчи пекех, Киев ĕççыннисем 1918 çулти январьти восстанире вилнĕ геройсен тăванлă масарĕ патне пухăнчĕç. Машиностроительсен, железнодорожниксен тата ытти предприятисен представителĕсем шурă юрпа витĕннĕ масар çине хĕрлĕ розăран тунă венок сем хучĕç».

Малалла хаçат митингра 1918 çулти январьти восстанин участникĕсене — вилнĕ паттăрсене асăнса сăмахсем тухса калани çинчен çырать.

Çавăн пек информацисемпе юнашарах эпир çĕнĕ çуртсем туни çинчен, фабрик-заводсем хăйсен планне срок-хăта ирттерес шут

# Советлă Грузин культури

## Грузин ССР Совнарком председателĕн заместителĕпе Г. Ф. Стуруа юлташпа калаçни

Февралĕн 25-мĕшĕнче Советлă Грузия 20 тултарать. Хăйĕн юбилейĕ тĕлне орденлă республика хуçалăхпа культура пурнăçĕн пур обласĕсенче те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Советлă Грузия талкишпех хутла пĕлекенсен республики пулса тăчĕ. Революцичченхи Грузире халăха вĕрентес ĕçре пĕтĕм «общеземский доходсен» 4 процентне кăна расходланă. Иртнĕ çул Грузин СС Республики бюджечĕн 46,9 процентне халăха вĕрентес ĕçе расходланă. Совет власĕ пуçланнăранпа Грузири аслă шкулсем пысăк квалификацилле специалистсене 30 пин çынна яхăн вĕрентсе хатĕрленĕ. Грузири физиологсен шкулне Совет Союзĕн тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Грузири математиксем хатĕрленĕ упругость теорине тĕнчери наука питех те пысăк вырăна хурса хаклаççĕ. Физиксем теориллĕ тата экспериментлă научнăй кĕнекесем 30 кĕнекене çити çырнă. Грузин ССР Наукăсен Академине туса хуни наука ӳссе чечекленнине уççăн кăтартса парать.

20 çул каярах Грузире пурĕ те 5 театр кăна пулнă. Хальхи вăхăтра унта 49 театр ĕçлет. Государство консерваторине, театр институтне, государствăн юрăпа ташă ансамблне туса хунă. 20 çул хушшинче Грузири кинематографи художествăллă фильмсем 150 фильм ытла ӳкерсе кăларнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ совет кинематографийĕн ылттăн фондне кĕнĕ.

Художниксем, скульпторсем, писательсем творчествăллă пысăк çитĕнӳсем тунă. Художниксем Закавказьери большевикла организацисен историне кăтартса паракан чаплă картинăсен серине ӳкерсе хатĕрленĕ.

Грузири писательсем хăйсен произведенисенче грузин халăхĕн историне, орденлă республикăн кулленхи паттăр ĕçĕсене кăтартса панă.

Халăх творчести вăйлăн чечекленсе сарăлчĕ. Хуласемпе ялсенче хавасланă юрăсем шăранаççĕ, вăл юрăсенче телейлĕ халăх хăйĕн çĕнĕ пурнăçне мухтаса юрлать, ĕççыннисен телейне тăвакан аслă Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр юратни тата пĕтĕм чĕререн парăнни сăнчен юрлать. (ТАСС).



Салоники хули (Греция).

ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ.

# Европăри тата Африкăри вăрçă

## (Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Сурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем пуринчен ытларах Джарабуба тата Куфра оазисĕсем тавра пыраççĕ. Итали командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, Австралин Джарабуба районĕнчи часĕсем çав укреплени туса çирĕплетнĕ оазисăн гарнизонне итальянецсен тĕп вăйĕсенчен татса илнĕ. Англичансем, тет корреспондент, халлĕхе пĕтĕмĕшле атака тума шутламаççĕ, вĕсем итальянецсен гарнизонĕн боеприпассемпе çимĕç таврашĕсем пĕтĕмĕшпех пĕтсе çитессе кĕтеççĕ пулмалла. Куфра оазисĕн районĕнче, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, итальянецсем контратакăсем туса хăйсен положенине лайăхлатма хăтланнă, анчах çитĕнӳсем тăвайман. Унта де Голль генералăн часĕсем Итали войскисене хĕссе пыраççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Керен районĕнче, тесе калана Итали сводкинче, пĕр-пĕрне хирĕç артиллерирен персе тăнă. Англи самолечĕсем Массауа тата Диредауа çине пырса тапăннă. Стефани агентстви Керен районĕнчи çапăсусем çинчен çапла пĕлтерет: Керена пымалли айлăмсем тăрăх англичансем лобовăй атакăсем тата обходнăй маневрсем тунă, анчах та вĕсен атакисене йăлтах сирсе янă. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, çав операцисем вăхăтĕнче итальянецсем вунтăр пулеметсем, çĕршер винтовкăсем, минометсем, боеприпассем тата вăрçăн ытти хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

Джуба юханшывĕн анат вĕçĕнче (Итали Сомалийĕнче), тесе калана Итали сводкинче, англичансем хĕссех пыраççĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мегăра (Кăнтăр Абиссиния) тата Джуба юханшывĕ таврашĕнче англичансем тунă çитĕнӳсем çак енчен пысăк вырăнта тăраççĕ: çăмăрсем вăхăчĕ сывхарса килет, вăл март уйăхĕн варринче пуçланать. Итальянецсем фронтăн çак линине хăйсен аллинчех тытса тăма пултарсан, транспорт тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсем англичансем Абиссиние тапăнса кĕрессине чăрмантарнă пулĕччĕ. Кăнтăр-Африка войскисем, Мегăна илнĕ хыççăн, питех те кирлĕ çул патне тухнă. Кизимайона илни Мобас портĕнчен (Кения) тинĕс тăрăх çӳреме çул туса парать.

«Таймс» хаçатăн Абиссини чиккинче çӳрекен корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Энджабарăна (Абиссиния) туртса илни, Дангилăна туртса илнипечен, вăрçă ĕçĕсене малалла сарса пырас тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăнта тăрать. Англичансем, Энджабарăна туртса илнĕ хыççăн, Гондартан Аддис-Абебăна каякан çула татса тухнă. Энджарабăна укрепленти туса вăйлăн çирĕплетнĕ пулнă.

Вăтаçĕр тинĕс районĕнче Германи авиацийĕ Мальта çине, Англи самолечĕсем — Сицили çине пыра-пыра тапăннă.

Албанири фронтра, Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци войскисем фронтăн центральнăй секторĕнче çĕнĕрен наступленти пуçланă. Уйрăмăнах фронтăн центральнăй секторĕн çурçĕр пайĕнче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Греци хаçачĕсем çырнă тăрăх, операцисем Греци войскисемшĕн ăнăçлăн вĕренннĕ. Итали верховнăй командованийĕ: Итали самолечĕсем Эгейски тинĕсре Грецин пĕр пăрахаççĕ, тесе пĕлтерет.

Англи фронтĕнче вăрçă вăрçакан çĕршывсен авиацийĕн ĕçĕ кăштах палăрать. Февралĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтернĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи авиацийĕн соединенийĕсем Суэнси хулине (Кăнтăр Уэльс) портсен сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Англии хĕвеланăç сыранĕнче икĕ порт патне минăсем лартса тухнă. Çав кунах çĕрле Англи самолечĕсем Çурçĕр тата Хĕвеланăç Германири хăшпĕр пунктсем çине пырса тапăннă.

Февралĕн 22-мĕш. (ТАСС).

## Швецири хресченсен тата пулăçсен пурнăçĕ çинчен унти хаçатсем мĕн çыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, Февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Социал-демократен» хаçат Норрвикен местечкинче Бухуслен (Кăнтăр Швеция) округĕнчи ялсенчи килхуçи представителĕсен пухăвĕ пулса иртни çинчен пĕлтерсе, çапла çырать: «Пухура тухса калана хресченсем округри ялхуçалăхĕ йывăр положенире тăни çинчен кăтартса панă. Иртнĕ çулти кĕркуннех выльăхсенчен чылай пайне пусса пĕтернĕ. Хальхи вăхăтра нумай хресченсен утă та, улăм та çук. Çакна пула вĕсен хăйсен выльăхĕсене йăлтах пусса пĕтерме тивнĕ».

«Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бухуслен округĕн шыв хĕрринчи вырăнĕсенче пулă тытма пачах май çук, мĕншĕн тесен минăсем пит нумай лартса тултарнă. «Пулăçсен хальхи вăхăтра пурăнма нимĕнле средствăсем те çук, — тесе çырать хаçат, — çулла пулă питех те сахал тытнă, мĕншĕн тесен пулăçсем, минăсем çине пырса тăрăнасран хăраса, тинĕсе шалалла кĕме шикленнĕ, ун чухне вĕсем хăйсене çимеллĕх кăна пулă тытма пултарнă. Халĕ хăйсене валли те тытайăвлăшăрах».

## КĔСКЕН

▲ Сомбатхэй хулинче (Венгрия) «Юра тасатас тĕлĕшпе влаççем панă распоряженисене пурнăçламаншăн» суд 154 батрака штрафламалла тунă.

▲ Британи Колумбинче (Канада провинцийĕ) пурăнакан Япони поддани нăйĕсен çитес сывăх вăхăтрах регистраци тутармалла.

# Хĕрлĕ Çар кунне уявларĕç

ÇЕМЕРЛЕ, февралĕн 23-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Февралĕн 22-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарнă ятпа, пур çĕрте те савăнăçлă ларусем пулса иртрĕç. Комбинат клубĕнче пулнă пухура районри çар комиссарĕ Дмитриев, «Большевик» заводра — ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Исутов юлташсем докладсем туса пачĕç. Вĕсем хыççăн белофинсене хирĕç пынă çапăçу участникĕсем, «За отвагу» метальне наградăланă Ивановпа Вошняков юлташсем тухса сăмах каларĕç.

Енер йĕлтĕрлĕ ăмăртусем пулса иртрĕç. Унта 16 команда хутшăннă, вăл шутран хĕрарăмсен команди 3 пулчĕ. Командăсенчен «Восход» спорт обществи пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Уйрăм участниксенчен Петров юлташ («Восход» обществи) 10 километра 45,5 минута хушшинче тухса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Хĕрарăмсенчен Медведева мала тухрĕ.

Каток çинче «Восход» тата «Красная звезда» командисем тĕл пулса хоккейла вылярĕç. Вăйă 1:0 шутпа, «Восход» команди çĕнтернине пĕтрĕ.

Çăвăн пекех, районри чылай шкулсенче ачасен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ.

Х. Л.

* * *

ÇЕРПУ. Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарнине пысăк хаваслăхпа уявласа ирттерчĕç. Февралĕн 20-мĕшĕнче допризывниксен районри конференцийĕ пулса иртрĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн мухтавлă историйĕ çинчен доклад итлерĕç.

Февралĕн 22-мĕшĕнче учрежденисемпе предприятисенче, шкулсенче тата колхозсенче чаплă ларусем пулса иртрĕç. Çĕрпӳ хулинчи ĕççыннисен соцкультура çуртĕнче пулнă чаплă лараВĕнче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарни çинчен районри çар комиссарĕ Бурков юлташ доклад туса пачĕ.

## Осоавиахимовецсен тактикăллă занятийĕ

Иртнĕ вырсарникун Шупашкар хулинчи Осоавиахим членĕсен «Оборона тата наступлени» темăпа тактикăллă занятийĕ пулса иртрĕ. Вăл занятинче пурĕ 200 çынна яхăн пулчĕ.

Осоавиахимăн хула совечĕ тактикăллă занятине иртерме малтанах лайăх хатĕрленмен пирки унта хутшăнакансем сахал пулчĕç. Заняти те ăнăçлах иртмерĕ.

Осоавиахим хула совечĕн малашне ун пек ĕçсене тĕплĕнрех хатĕрленсе иртермелле.

## Укçана шăшисем вакласа тăкнă

Нумаях пулмасть Шупашкарти 60-мĕш номерлĕ перекет кассинче çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: унта пĕр Н. хушаматлă хĕрарăм пысăк кĕнĕ те кассира çĕтĕк укçасем тыттарнă.

— Тарăхасшăн улăштарса парăр çак укçасене, тенĕ вăл.

Кассир хĕрарăм панă укçасене номерсем тăрăх тĕплĕн тĕрĕслесе пăхнă. Вăл укçасене пĕтĕмпех шăшисем çине вакласа пĕтернĕ пулнă. Цифрăсем тăрăх шутласа пăхнă хыççăн çав хĕрарăмăн укçине пурĕ 3.725 тенкĕ шăшисем вакланă.

## Красноармейский районра

**Вагон-музей.** Нумаях пулмасть Трак разъездне Хусанти В. И. Ленин музейĕ организациленĕ вагон-музей килсе кайрĕ. Вăл унта 8 сехет хушши ĕçлерĕ.

Вагон-музея В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кăтартакан экспонатсемпе тата плакатсемпе пуянлатнă.

Музея чугунçул çинчи рабочисем, сывăхри колхозри колхозниксемпе шкул ачисем 200 çын кĕрсе курнă.

▲ **Хата-лаборатори.** «Волга», «Прогресс», «Янмурзино», «Шимар», «Красная Шатьма», Сталин, Степан Разин ячĕпе тăракан тата «Красное Сормово» колхозсенче хата-лабораторисем уçăласçĕ. Районра ку таринчен пĕр хата-лаборатори кăна пулнă.

▲ **Металло-ремонтнăй мастерской.** Çак кунсенче Красноармейское ялĕнче металло-ремонтнăй мастерской ĕçлеме тытăнчĕ. Унта 12 çын ĕçлеççĕ. Мастерской хуçалăхра кирлĕ япаласене: самомар, чайник, çĕвĕ çĕлемелли машина, патефон тата ыт. те юсать. Çавăн пекех колхозсем валли урапасем, çунасем тимĕрлесе параççĕ.

П. М.

## Военизированнăй мото-кросс

Февралĕн 23-мĕшĕнче, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарнă ятпа, Шупашкарта военизированнăй мото-кросс пулса иртрĕ.

Кăнтăрла 12 сехетре старт пулчĕ. Мотоциклистсем Кадыков урамĕпе Атăл çине тухрĕç, унтан Кувшинкăри канмалли çурта, пурĕ 25 километр хушши, кайса килчĕç.

Мото-кроса 8 çын хутшăннă. Вĕсенчен М. Д. Аникин (колхоз техникумĕ) 51 минута та 15 секунда хушшинче тухса пĕрремĕш вырăн, Ф. Д. Глухов (ялхуçалăх институчĕ) 52 минута та 53 секундăра тухса иккĕмĕш вырăн, А. А. Павлов (Метсантруд) виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

## Хĕрлĕ Çар кунне физкультура ĕçне вăйлатнипе кĕтсе илчĕç

КАНАШ. Янгăльчри промартель çумĕнчи «Восход» физкультура коллективĕ Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă куна физкультурăпа оборона ĕçне вăйлатнипе кĕтсе илчĕ.

Коллективра физкультурниксен хисепĕ 99 çынна çитрĕ. Вĕсенчен «Ворошиловский стрелок» значок нормисене пама 27 çын, ГСО тата ПВХО значокĕсен нормисене пама 48 çын хатĕрленеççĕ.

Пĕлтĕрпе çӳреме вĕренес тĕлĕшпе ăмăртусем туса ирттернĕ. Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне хутшăнса ГТО значокĕн хĕллехи нормисене 40 çын панă.

И. КУЗНЕЦОВ.

*Тĕрĕслевсе килнĕ материалсем тăрăх*

## Колхоз пурлăхне çаратакансем

Пирĕн редакцине Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (Çĕрпӳ р.) счетоводчĕ Анисимов тĕрлĕ ултавлă майсемпе хăйне ĕçкунĕсемшĕн тивекен тырра икĕ хут илни тата кладовщик Дмитриев итем çинчи тырпулсене приходламасăр илсе кĕртни çинчен çырса пĕлтерчĕç. Редакци вăл материала тĕрĕслесе айăплисене ответ тыттарма выраНа ярса пачĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи милици отделенийĕ пĕлтернĕ тăрăх, материалта асăннă фактсем тĕрĕс пулнă, Анисимовпа Дмитриев пирки уголовнăй ĕç пуçарнă, халь следстви пырать.

СУД

## Спекулянт тата ăна пулăшакан

ИШЛЕЙ. Тивĕш ялçынни Иван Михайлович Михайлов нумай вăхăт хушши спекуляци туса пурăннă. Вăл ялхуçалăх продуктисем илсе Кинешма, Саратов тата ытти хуласене кайса сутнă, унтан промтаварсем кӳрсе килнĕ. Вĕсене хаклă хакпа сутса услам илсе пурăннă.

Анаткас Маркари туллимар вăтам шкул директорĕ Краснов ăна спекуляцилле ĕçсем тума пулăшнă. Вăл Михайлова шкулта завхоз пулса ĕçлет тесе суя справка панă.

Михайлов спекулянт патĕнче промтаварсем: галошсем, одеялсем, ситец т. ыт. те нумай тупнă. Халăх сучĕ çак ăпаласене пурне те государство валли туртса илмелле, Михайлова 7 çуллӑха тĕрмене хупса лартмалла турĕ.

Суя документсем туса панăшăн Краснова айăплама уголовнăй ĕç пуçарнă.

С. АНДРЕЕВ.

## Лекци

Паян, февралĕн 25-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче философи çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли «**Борьба материализма и идеализма в XVIII веке**» темăпа тӳлевлĕ лекци пулать. Лектор —**Сафрошкин** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

# Кашни шкул валлиех—çамрăк техниксен кружокĕ

РСФСР Наркомпросĕн коллегийĕ çамрăк техниксен ĕçĕ çинчен тăракан ылтăва сӳтсе-явнă. Республикăра çамрăк техниксен 470 станцийĕ, пионерсен дворецĕсемпе техникăллă кабинетлă çурчĕсем 700 яхăн шутланаççĕ.

Çĕршыври чылай шкулсем ачасене ĕçе юратма вĕрентсе воспитани параççĕ, практикăллă хăнăхусем параççĕ. Мускаври 273-мĕш номерлĕ шкулта çамрăк техниксен клубне организацинленĕ. Вăл клубра ачасем шкулти занятисем валли приборсем тата пăхса вĕренмелли пособисем хатĕрлеççĕ. Çамрăк техниксен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи (Чăваш АССР) станцийĕ ССР Союзĕнче чи пуçласа çамрăк трактористсен кружокне организацинленĕ. Хальхи вăхăтра 100 ача трактора вĕренсе пĕтернĕ, вĕсем унпа ĕçлеме вĕреннĕ. РСФСР Наркомпросĕн çамрăк техниксен центральнăй станцийĕ «çамрăк техниксем — шкула пулăшас ĕçре» темăпа конкурс туса ирттернĕ.

Çак конкурсра ачасем хăйсем тунă 10 пин учебнăй прибор тăратнă.

Анчах та çамрăк техниксен кружокĕсенчен нумайĕшĕнче вĕренекенсене ремеслапа паллаштарас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. РСФСР Наркомпросĕн коллегийĕ йышăннă решени тăрăх мĕнпур вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче техникăллă кружоксем — çамрăк электриксен, фотографсен, трактористсен, автомобилистсен, комбайнерсен тата ытти техниксен кружокĕсене организацилеççĕ. Кружоксене ертсе пырас ĕçе учительсем çине хураççĕ. Вĕсене пулăшас ĕçе инженерсемпе техниксене—вĕренекенсен ашшĕ-амăшсене, шкулсене шефа илнĕ предприятисенчи специалистсене, аслă классенче вĕренекенсене явăçтараççĕ. Çамрăк техниксен чи лайăх станцийĕсене наградăлама РСФСР Наркомпросĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавĕсем виçĕ ялав пуласçĕ. (ТАСС)

## Театр самодеятельноçĕн хулари смотрĕ пуçланчĕ

Февралĕн 23-мĕшĕнче, Шупашкарта, ялхуçалăх институчĕн залĕнче, театр самодеятельноçĕн хулари смотрĕ пуçланчĕ. Смотра искусство ĕçĕсен ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн начальникĕ В. Т. Ржанов юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Ун хыççăн смотр участникĕсене Халăх пултарулăх çурчĕн директорĕ Лазарев юлташ саламларĕ.

Смотрта «Кожупряжь» артелĕн Козлов артист ертсе пыракан драмкружокĕ Поспелов сырнă. «Мост» ятлă пĕр пайлă 4 картинăллă пьесăна, Стройтехникум драмкружокĕ Назаровăн «Мать» ятлă пĕр пайлă пьесине выляса пачĕç.

«Мост» постановка куракансене килĕшрĕ. Уйрăмăнах, старик рольне Шестов юлташ, Яша рольне Миронов юлташ лайăх вылярĕç.

«Мать» постановка япăх иртрĕ. Стройтехникум коллективĕ ку пьесăна лартма начар хатĕрленнĕ, драмкружок руководителĕ А. Ермакова каланă тăрăх, вĕсем пурĕ те 5 репетици çеç тунă.

Халăх пултарулăх çурчĕн малашне драмкружоксен ĕçне лайăх тĕрĕслемесĕр вĕсене смотра хутшăнтарас пулмасть.

Смотр мартăн 4-мĕшĕнче пырать. Унта пурĕ 20 коллективăн пултарулăхне пăхса тухма палăртнă.

А. К.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

## Шăмă тата лимфа железисен туберкулезĕ

Анаткас Уçырма ялĕнчи (Канаш р.) колхозник Гаврилов Григорий ман пата сыру ячĕ. Унăн малтан чĕркуççи ыратса çӳренĕ, кайран шыçса кайнă. Пурăна-киле хулхушшине тата ытти çĕре юман йĕкелĕ пек шыçăсем тухнă. Вăл шыçăсем ыратмаççĕ, анчах шăтса юхаççĕ, ӳт илмеççĕ. Гаврилов юлташ ку чирпе Канаш больницине те кайса пăхнă, çавах усси пулман. Халь вăл манран мĕнле чир иккенне тата мĕнле сывалмалли çинчен ыйтать.

Сыру тăрăх, Гаврилов юлташ, ура сыппи тата лимфа железисен туберкулезĕпе чирлĕ теме пулать. Çак чирпе чирлекенсем халăх хушшинче сахал мар. Вăл туберкулез палочкисем шăмма, сыппа тата лимфа железисене лексен пуçланать. Ун пекки пуринчен ытла организмра ăçта та пулсан урăх çĕрте (час-часах ӳпкере) туберкулез очагĕ пулсан палăрать. Туберкулез палочкисем пĕр вырăнтан юн урла вуçаççĕ. Туберкулез палочкисем кислородсăр пурăнаймаççĕ. Çавăнпа туберкулез пуринчен ытла ӳсекен, çамрăк сынсене ерет. Сăмахран, ачасен е çитĕнекен çамрăксен ал-ура шăммисем сыпă тĕлĕнчен вăрăмланса, çитĕнсе пыраççĕ. Çак вăхăтра, çав çитĕннĕ çĕре, юн тата унпа пĕрле кислород та ытларах пырать. Ватăлнă-çемĕн, шăмă ӳссе çитсе чарăнсан, сыпă тĕлĕнчи юн тымарĕсем чылайĕшĕ пĕтсе лараççĕ. Çак вăхăтра вара шăмă е сыпă туберкулезĕпе пуçласа чирлекен çынна курма çук е пулсан та питĕ сайра. Çавнашкалах, туберкулезпа лимфа железисем те çамрăк çынсен ытларах пăсăлаççĕ.

Шăмă е лимфа железисен туберкулезĕ вăрăма тăсăлакан тата эмелсене парăнма юратман чир. Пуçланасса та кун пек туберкулез вăрахăн пуçланать. Унпа ытларах пĕçĕ тата ура сыпписем, çурăм шăммисем, унтан, сайрарах аслă тата ыт. сыпăсем чирлеççĕ. Гаврилов юлташ калашле, чир малтан сыпă ыратма пуçланипе палăрать. Анчах ыратни, шăмă варри çĕрнĕ чир чухнехи пек, хытă тата пĕрмай палăрмасть. Хăш чух ыратмасть, тепĕр чух, ĕçлекелесен е утсан мĕнтусан, ыратни вăйланать. Чир ал-ура пулсан, пурăна-киле шыçса каять, мĕншĕн тесен пӳр тулса ларать. Татах каярахпа шыçă шăтса юхать, пӳрĕ унăн шĕвек, час-часах нимĕн ыратмасăр юхать, анчах чарăнма пĕлмест. Сывалмасăр çаплипех пурăнсан ура мышцисем çӳхелсе, пĕтсе каяççĕ, ура сыппи те пĕтсе ларать, ура хусланса кукăрлса юлать. Пĕр сăмахпа каласан, кун пек чух çын уксах е урасăр-алăсăр тăрса юлать.

Туберкулез чирĕ çурăм шăммине лексен çавнашкалах малтан ыратнипе палăрать, кайран çын курпунланса ларать. Лимфа железисенчен туберкулезпа пуринчен ытла майри тата хулхушши айĕнчи железисем чирлеççĕ. Кун пек чух железисем нимĕн сăлтавсăрах тата ыратмасăр тăртанса, пысăкланса каяççĕ, каярахпа шăтса юхма пуçлаççĕ. Железисем пурте пĕр тăрук чирлемеççĕ, пĕрин хыççăн тепри пысăкланса пыраççĕ. Пĕринчен пӳр юхать, тепри тăртанса кайнă, виççĕмĕшĕ тин кăна пысăкланма пуçланă тата ыт. Çавăн пек темиçе çул хушши пулса пырать, чир хăвăрт иртмест, нимсем сĕрни те пулăшаймасть.

Шăмă туберкулезĕпе чирлĕ çынсем хуллен майĕпе пĕтсе пыраççĕ, организм вăйсăрланса пырать, урăх чирсене хăвăрт парăнакан пулать. Лимфа железине чирлĕ çынсем хăшпĕр чухне çиелтен пăхма мăнтăр пек кăтартаççĕ, анчах вăл туберкулез токсинĕ йĕркесĕр ӳте шӳтернинчен кăна килет. Шăнсан мĕн-тусан вĕсем те часах чирлеççĕ, пуринчен ытла вĕсен кун пек чух пăсăлнă железисем тĕлĕнчи ӳт пысса каять.

Шăмă е лимфа железисен туберкулезĕ организмри урăх çĕрти очагран пуçăнать терĕмĕр пулсан, унтан сыхланас тесен пĕтĕмĕшпех туберкулез чирĕнчен асăрханса пурăнмалла. Кĕскен каласан, вĕсем çак майсем пулаçĕ: йĕркеллĕ, тутлăхлă апат-çимĕç, уçă сывлăш, физически ĕç е физкультура, ӳт-тире таса тытни, пӳрт-çурта тасалăха астуса пурăнни, туберкулезпа чирлĕ çынтан асăрханса пурăнни тата ыт. Шăмă е лимфа туберкулезĕпе чирлесен те чи малтан çав майсенех пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшмалла, мĕншĕн тесен вĕсем организмне вăйне хăпартма пулăшаççĕ. Организм вăйне хăпартни туберкулез чирне сыватнă çĕртен нимрен малтан кирлĕ япала пулса тăрать. Шăмă тата лимфа туберкулезĕпе чирлĕ çынсен уçă сывлăшра ытларах пулмалла, çуллахи вăхăтра нимрен ытла хĕвел çуттипе уçă курмалла. Анчах çав асăннă режима пурте пĕтĕмпе килте тытса пыраймаççĕ-ха, çитменни çине киле парса янă эмел те сахал пулăшать, тата чир вăрăма тăсăлать терĕмĕр. Çавăнпа шăмă е лимфа туберкулезĕпе чирлĕ çынсен сывалса çитиччен пĕрмаях врачсен контролĕпе пурăнмалла. Больницăсенче кун пек чирлĕ çынсене гипс хурса тата сутăпа сыватаççĕ. Час-часах сывалса çитесси темиçе уйăха тата çулталăка тăсăлать. Нумайĕшне вĕсенчен курортсене ярасçĕ. Курортсенче сывалма шанчăк пысăкрах. Путевкăсене райздравсенчен ыйтмалла.

Шăмă е лимфа железисен туберкулезне сыватакан курортсем Совет Союзĕнче салхал мар.

Врач К. ПАЙРАШ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ МЕЖРАЙБАЗЕ ЧУВАШПОТРЕБСОЮЗА

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ

СКЛАДСКИЕ РАБОЧИЕ

Она же сдает подряд НА ВЫГРУЗКУ и ВЫВОЗКУ соли из баржи.

С предложением обращаться: гор. Чебоксары, ЧАССР, ул. Карла Маркса, д. 3, 2-й этаж, ком. 4.

Дирекция.

3–1

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН“ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ

РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЕ

„МАКАР НЕЧАЙ“

*ятлă, художествăллă çĕнĕ фильм кăларать.*

Сценарий авторĕ — Б. СТАРШЕВ. ⌒ Режиссер — Ф. ШМИДТГОФ. ⌒ Оператор — А. МИШУРИН. ⌒ Художниксем: Ю. РОГАЧИЙ, Н. ТРЯСКИН. ⌒ Звукооператорсем: Н. МИННА, О. КОТОВА.

Паллăрах рольсенче:

Адамов—В. Зайчиков. ○ ○ Стахова—арт. Н. Алисова.
Макар Нечай—арт. В. Добровольский. ○ ○ Оленин—арт. Ф. Дубровский.
Галя—арт. орденоносец В. Ивашева. ○ ○ Головин—арт. И. Садовский.
Панас мучи—арт. А. Дунайский. ○ ○ Владимиров—арт. А. Максимов.

Киеври киностудийĕн производстви. „Главкинопрокат“ кăларнă.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çыру-сем пабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăм» журналăн — 6 — 23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0 — 85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2584.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.